Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ИЙУЛЬ 15 ЕРНЕКУН
161 (4973) №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухать
ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомăн хаçачĕ
Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67
Ред. заместителĕн 0—85
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйĕн 6—23

Тырпулсене кĕске срукра тата пĕр тăкаксăр пухса кĕртер

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ „1938 çулти тырпула пухса кĕртесси çинчен“ постановлени йышăнса колхозсемпе совхозсем валли тырпулсене пухса кĕрес тата государствăна тырă тăратас ĕçсене ăнăçлăн ирттерме кĕрешӳ программи туса пачĕ. Правительствăн çав докуменчĕ колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче тĕплĕн ăнлантарса панă вырăнсенче тырпулсене кĕске срукра тата тăкаксăр пухса кĕме хатĕрленсе çитессишĕн вăйлăн кĕрешеççĕ, çав колхозсенче социалисăмлă ăмартса ĕçлесси тата ĕç тухăçлăхĕ кунран куна ӳссе пырать.

Тырпулсене вырма вăхăт çитсе тăчĕ. Çанталăк уйăр тăрать. Тырпулсем хăвăрт пиççе çитеççĕ. Пайан-ыransenchex Чăваш республики колхозĕсенче кĕрхи тырасене вырма массăлăн тухаççĕ. Йелчĕк районĕнчи Тимирйазев йачĕпе тăракан колхозра ийулĕн 11-мĕшĕнчех пулса çитнĕ вырăнсене суйласа вырма тухнă. Çав районрах „Осоавиахим“ колхозра ийулĕн 13-мĕшĕнче жнейкăпа вырма тухнă. Патăрйел районĕнче те ийулĕн 12—13-мĕшĕнче ыраш вырма тухрĕç. Çапла ĕнте Чăваш республикинчи колхозсемшĕн те чи ответлă ĕç тапхăрĕ пуçланчĕ.

„Тырпулсене пухса кĕрес ĕç вăл,— çырать „Правда“ хаçат,—политикăлă пысăк ĕç. Кайа йулсан, тăкаксем тусан,—вара вăл ĕçкунĕ хакне чакарни, колхоз тупăшне сахаллатни, нумай тырă çухатни пулать“. Колхозсенче тырпулсене кĕске срукра тата тăкаксăр пухса кĕртме мĕн кирлисем пурте пур. Колхозниксемпе колхозницăсене ĕçе большевикла организацилени çеç кирлĕ. Парти организацийĕсемпе йалти коммуниссем умĕнче тăракан пайанхи тĕп задачă—тырпулсене ăнăçлăн пухса кĕрес ĕçре колхозсенче большевикла йĕркелĕх тăвасси, колхоз активĕпе стахановецсемпе тачăрах çыхăнса колхозниксем хушшинче социалисăмлă ăмăртупа стахановла ĕçлессине анлăн сарса йарасси пулса тăрать.

Тырпулсене лайăх пухса кĕме тăрăшакан, йалхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçлессишĕн кĕрешекен колхозсем пирĕн сахал мар. Анчах чылай районсенче колхозсем тырпулсене пухса кĕме халь те тĕплĕн хатĕрленсе çитеймен-ха. ПСК(б) Парти Тĕпкомĕ çумĕнчи Парти Контроль Комиссийĕн Чăваш республикинчи уполномоченнăйĕ йенĕпе Елĕк районĕнче тĕрĕслесе пăхнă 6 колхозран ийулĕн 10 мĕшне перинче те уй ĕçне хатĕрленсе çитейменни палăрнă. Тĕп çитменлĕхсем çаксем: машинăсене йусаса çитерейменни, ĕç планĕсене туманни тата ĕç вăйĕсене йĕркелесе тухманни, витнĕ итемсене йусаса лартманни, çĕнĕ тырра йышăнма ампарсене тасатса дезинфекцилесе хуманни, колхозсем хушшинче тунă ăмăрту договăрĕсене тĕрĕслесе çиэерменни. Çавăн пек çитменлĕхсем ытти районсенче те нумай.

Тырпулсене пухса кĕрес ĕçе кăтартулăн организацилесси, пĕр тăкаксăр тата вăхăтра пухса кĕрессси, государствăна вăхăтра тата чи лайăх тырă тăратасси,—çакă пулать ĕнтĕ тырпулсене пухса кĕртес ĕçре пĕтĕм Союзĕпе социалисăмлă ăмăрту пуçарса йаракансем—щербиновецсем лартнă тĕп задачă. Социалисăмлă ăмăртупа стахановла ĕçлессине анлăн сарса, тырпулсене пухса кĕме тухиччен йулнă шутлă кунсенче,—кăнтăр йенчи районсенче уй ĕçĕ вăхăтĕнчех,—туса çитермен ĕçсене пурне те туса çитермеле.

Колхозсен уйхирĕнче кăçал 193 комбайн ĕçлемеле. Калас пулать, колхозсем çеç мар, хăшпĕр машинă-трактăрлă станцисем те 1938 çулхи тырпула пухса кĕме çителĕклĕ хатĕрленсе çитеймен. Чылай МТС-сенче комбайнсене йусаса пĕтермен, йе йусанă хыççăн пушшăн ĕçлеттерсе пăхман, горючисене кирлĕ таран турттарса хатĕрлеймен. Шăнкăртам районĕнче çĕнĕ МТС ĕçлет. Кунта кăçал 5 комбайн илсе килнĕ. Анчах комбайнсене ĕçлеттерме кадр çитмест. Шăнкăртамра тата унпа йунашар Патăрйел МТСтанцинче те механиксем çук. Парти тата совет организацийĕсем çерĕç пайĕсен тата МТСтанцисен ĕçне йĕркелеме хăвăрт пулăшмала.

Пурнăçра, ĕçре политикăна хуçалăхла ĕçрен уйăрмала марри çинчен Сталин йулташ кăтартса панине районсенчи парти организацийĕсем аван пĕлеççĕ. Анчах практикăла ĕçре çав правилăна пур çĕрте те пурнăça кĕртсе пымаççĕ. Çавăнпа çеç ăнланма пулать хăшпĕр колхозсемпе МТС-сем уй ĕçне тухма тĕплĕн хатĕрленсе çитменнине.

Тырпулсене ăнăçлăн пухса кĕртессине, çĕнĕ тырра государствăна вăхăтра тăратассине çынсем—колхозниксемпе колхозницăсем татса параççĕ. Парти райкомĕсен, парти активĕн, йалти коммуниссен колхозниксем хушшинче ĕçлесси çинчен пĕр минутлăха та манмала мар. Колхозниксене хаçатсем вуласа парса политикăлă çĕнĕ хыпарсем çинчен каласа памала, вăйлă тырпул пире мĕн пани çинчен тата йутпатшалăхсенчи хресченсем мĕнле пурăнни çинчен ăнлантарса памала. ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă постановлени çинчен пĕлмесĕр пĕр колхозник те йулмала мар пултăр. Партилĕ-политикăла ĕçе хуçалăхла ĕçпе çыхăнтарни халь тырпулсене вăхăтра тата тăкаксăр пуçтарса кĕртес задачăна пăхăнса тăрать.

Вăйлă тырпул хăй тĕллĕн пырса кĕмест. Унăн кĕртен пуçласа тепĕр кĕре çитиччен кĕрешеççĕ. Пĕтĕмĕшпе илсен, пирĕн колхозниксем кăçалхи вăйлă тырпулшăн кутаранччен аван ĕçлесе пычĕç. Халь ĕнтĕ колхозсенче организацилĕх, большевикла сыхăлăх тата та çӳлĕрех вырăнта тăмала. Халăх тăшманĕсем ĕç вăхăтне вăрăма йама, тырпулсене çухатса пĕтерме пахĕç. Машинăсем пурте шуçăмран пуçласа тĕттĕм пулаччен пĕр чарăнусăр ĕçлесе тăмала тума кирлĕ. Пуйан тырпул пĕр пучах та, пĕр пĕрчĕ те çухалмала мар. Клешчсенчен сыхлама ĕçхатĕрсене, ампарсемпе, складсене дезинфекцилесе хумала. Вут-кăвартан сыхлама трактăрсем çумне хĕлхем сӳнтермеллисем лартмала, йалсенче пушартан сыхланас ĕçе вăйлатмала. Кашни уйра, итем çинче, склад çумĕнче шанчăкла хурал пултăр.

Партипе правительствă колхозниксен пурнăçне лайăхлатассишĕн хытă тăрăшаççĕ. Колхозниксене колхозран кăларма чармала тунни тата тупăшсене тĕрĕс валеçмеле тунни колхозниксен ĕçлес кăмăлне татах çĕклентермеле. Уй ĕçĕ вăхăтĕнче пĕрлешӳлĕ столовăйсем, йаслĕсем организацилени, кану вăхăтне культурлă та савăнăçлă ирттермеле тунни колхозниксен ĕç тухăçне ӳстерме нумай пулăшни çинчен пĕр колхоз руководителĕн те манмала мар.

Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн Уполномоченнăйĕпе Заготзерно контори çинче государствăна тăратмалли тырра йышăнас йенĕпе пысăк ответлăх тăрать. Хатĕрлев пункчĕсенчи 147 складсемпе площадкăсенчен ийулĕн 1-мĕшне 29 вырăн çеç хатĕрлени çав организацисем пачах çителĕксĕр ĕçленине кăтартать. Вĕсен çитменлĕхĕ—оперативлăх çуккипе ответлăха туйманни.

Тырпулсене пухса кĕнипе йалхуçалăх çулĕ вĕçленет. Кăçалхи йалхуçалăх çулне вĕçленипе пирĕн колхозсем татах çирĕпленмеле, колхозниксем пуйанрах та культурлăрах пурăнакан пулмала. Çавна татса пааракани—тырпулсене пухса кĕртес тапхăр. Çав тапхăр парти организацийĕсене, йалти коммуниссене, колхоз руководителĕсене ниxçанхиччен лайăхрах ĕçлеме хушать.

Говард Йуз Йакутскран вĕçсе тухнă

Америкă льотчикĕ Говард Йуз, çĕр чăмăрĕ тавра вĕçекенсен, ийулĕн 13-мĕшĕнче Мускав вăхăчĕпе 1 сехет те 37 минутра Омскран вĕçсе тухса Йакутск патне çул тытнă. Çав кунах 12 сехетре Йуз Йакутскри аеродром çине ăнăçлăн ларнă. Омскпа Йакутск хушшине вăл 10 сехет те 31 минутра вĕçсе анса ларнă.

Нумай мар вăхăт канnă хыççăн, 15 сехет те 01 минутра Йуз Йакутскри аеродром çинчен вĕçсе çĕкленнĕ, Аляска патне (Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсенче) çул тытнă.

Говард Йуз Фербенкса (Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсенче) 10—11 сехет тĕлнеле çитме шутлать.

(ТАСС).

Колхозниксемпе йединоличниксем хушшинче займ çинчен ăнлантарас ĕçе тимлĕн сарар!

Пурте çырăнна

Деткомиççин Шупашкарти хапрăкĕнчи рабочисем çĕнĕ займа пурте çырăнна. Отпуска тата инçе çула кайнă хăшпĕр рабочисем (пĕтĕмпе 8 çын) вĕсем те çак кунсенче килеççĕ.

Рабочисем çĕнĕ займа чылайĕшĕ уйăхри ĕçукçи чухлĕ çырăннă. Акă, сăмахран, çăмата йавалакан цехри стахановец Тарасăв тата Волкăв йулташсем иккĕшĕ те 400-шер тенкĕлĕх çырăннă. Деткомиççи хапрăкĕсен пĕрлешĕвĕн управляйушчийĕ Зимин йулташ займа 800 тенкĕлĕх çырăннă. (Унăн уйăхри ĕç укçийĕ 650 тенкĕ).

Пайанхи куна пĕтĕм хапрăкĕпе 19.470 тенкĕлĕх çырăннă.

Хар. Лис.

★

Хамăр пурнăç чечекленĕвĕшĕн

СĔНТĔРВĂРРИ. Йуртакасси йалсоветĕнчи колхозниксем Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх Займ укçине тӳлеме пуçларĕç. Колхозниксем займшăн укçа тӳленĕ чухне çапла калаççĕ:

— Çĕнĕ займа епĕр пурте пĕр кăмăллă пулса çырăнтăмăр. Займ укçине те вăхăтра тӳлесе татăпăр. Займа епĕр хамăрăн пурнăç чечекленĕвĕшĕн çырăнтăмăр,—теççĕ.

Çапла пысăк хавасчăхлă пулнипе Тутаркассинчи „Морйак“ колхоз членĕсем çĕнĕ займ укçине чылайĕшĕ тӳлесе татрĕç. Ийулĕн 9-мĕшне колхозĕпе займшăн 400 тенкĕ укçа пухрĕç. Займ укçи пухасси халĕ вăйланса пырать.

Г. Смирнов.

★

Ватă колхозниксем хĕпĕртесе çырăнаççĕ

ШĂХАСАН. Кайри Ăнтавăш йалĕнчи колхозниксемпе йединоличниксем кăçал çĕнĕ займа иртнĕ çулхинчен икĕ хут ытларах çырăнчĕç. Ийулĕн 8-мĕшне йалĕпе 2.300 тенкĕлĕх çырăнна. Займ сарас ĕçре пуринчен ытла займ уполномоченнăйĕ Макçим Филиппăв йулташ тăрăшса ĕçлерĕ. Ватă колхозниксем те займ çырăнмасăр йулман. Акă, 61 çулхи Федăр Çеменăв—90 тенкĕлĕх, Йакăв Федăрăв—60 тенкĕлĕх çырăнчĕç.

Халĕ йалта займшăн укçа пухас ĕç пуçланчĕ.

Й. Çтепанăв.

★

Сĕнтĕр йалсовечĕ малта

МĂН СĔНТĔР (телефон тăрăх). Ийулĕн 10-мĕшне районра 110 пин тенкĕлĕх займ çырăннă. Займ ĕçĕпе Мăн Сентĕр йалсовечĕ малта пырать. Кунта пĕр çын та займ çырăнмасăр йулман. Займ сарас ĕçре „Ударник“ колхозри агитатăр Кожевникăв йулташ тăрăшса ĕçлет. Вăл тăрăшнипе „Ударник“ колхозра çĕнĕ займшăн 110 тенкĕ укçа пухнă.

М. Исайĕв.

★

Займ илмен çын йулман

ЙĔПРЕÇ. Туçа йалсоветĕнчи колхозниксемпе йединоличниксем Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх Займа 6.500 тенкĕлĕх çырăнчĕç. Ийулĕн 10 мĕшне йалсоветĕнче займ илмен çын йулмарĕ, кашнийех çĕнĕ займа ăшă кăмăллă пулса çырăнчĕç. Йалсоветĕнче займ сарас ĕçре займ уполномоченнăйĕсем Миронăвпа Волкăв йулташсем тăрăшса ĕçлерĕç.

Комиссарăв.

★

Займ хроники

ЕЛĔК. Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх Займа илме Елĕк йалсоветĕнчи колхозниксемпе йединоличниксем пурте çырăнчĕç. Йалсовечĕпе ийулĕн 8-мĕшне 4.500 тенкĕлĕх займ çырăннă. Займ çырăнтарас ĕçре агитатăрсем П. Никитин, А. Петрикăв, В. Гордейĕв йулташсем тăрăшса ĕçлерĕç.

Д. Матвейĕв.
Г. Андрейĕв.

КУСЛАВККА. Районри Осоавиахим Советĕнче ĕçлекенсем Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх Займа кашнийех пĕрер уйăхри ĕç укçи чухлĕ çырăнчĕç. Халĕ Осоавиахим советĕнче ĕçлекенсем Осоавиахим членĕсем хушшинче займ сарас ыйтупа калаçусем ирттереççĕ.

Смирнов.

Халех тӳлесе татрĕç

ИШЛЕЙ. Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх Займа çырăнас тата займшăн укçа тӳлес ĕç кашни кунах вăйланса пырать. „Алино“ колхоз колхозникĕсем ийулĕн 13-мĕшĕнче 3.500 тенкĕлĕх займ çырăнса укçине те çав кунах тӳлесе татрĕç.

Серебрйаков-Ошмань.

КАНАШ. Вăтапуç йалсоветĕнчи колхозниксемпе йединоличниксем çĕнĕ займа 2 пин тенкĕлĕх çыранса илчĕç. Халĕ займ уполномоченнăйĕсем займ укçине кĕске срукра пухас тĕлĕшпе ĕçлеме пуçларĕç.

Çтепанăв.

Çĕнĕ займшăн агитацилекен агитатăр-колхозниксем

Совет Союзĕнчи ĕççыннисем хăйсен перекетленнĕ укçи тенкине савăнсах йуратнă тăван çĕршывăн хуçалăх тата оборонă хăватне тĕреклетмешкĕн параççĕ.

Нагорно-Карабахри Джераберт МТС-че ĕçлекен стахановец-трактăрис—Адамйан йулташ займ çыранса, çапла калавă:

— Пирĕн çĕршыв урса кайнă фашисăм пырса тĕкĕнейми крепăç пулса тăтăр тесе, епĕ хамăн перекетленнĕ укçа тенке пама çеç мар, хамăн пурнăçăма пама та хатĕр.

Адамйан йулташ çĕнĕ займа 1.300 тенкĕлĕх çырăнна, укçине ийуль уйăхĕ пĕтиччен тӳлесе татма самах панă. Адамйан йулташ ĕçлекен бригадă членĕсем пурĕ 7.500 тенкĕлĕх çырăннă.

Çĕнĕ займа колхозниксем пĕр çын пек пулса, организациллĕн çырăнаççĕ.

Дагестан АССР-чи Шелковски районри „Красный пахарь“ артелĕн членĕсем государства 100.000 тенкĕ кивçен панă.

Нумай колхозниксем займ укçине çавăнтах, çырăнсанах параççĕ. Кизляр районĕнчи Карл Маркс йачĕпе тăракан колхоз членĕсем 1.500 тенкĕ тӳлесе татнă.

Суйлав кампанийĕнче пулнă активис-колхозниксем çĕнĕ займшăн большевикла агитацилеççĕ. „Красный пахарь“ колхозри ватă колхозник Федăр Потапăв тата унăн хĕрĕ стахановка Ксенийа Федăрăвнă хăйсем ĕçлекен фермари колхозниксем хушшинче ăнлантарулă ĕç туса пыраççĕ. Хальхи вăхăтра ферма тăрăх çĕнĕ займа 3.200 тенкĕлĕх çырăннă.

(ТАСС).

Коккинакипе Брйандинский йулташсем Мускава таварăнаççĕ

Ийулĕн 13 мĕшĕнче Мускав вăхăчĕпе 1 сехет те 33 минутра герой льотчиксем Коккинакипе Брйандинский йулташсем „Мускав“ самолетпа Хабаровскран Мускава килме вĕçсе тухнă.

15 сехет те 42 минутра самолет Новосибирскри аеродром çине анса ларнă. 4.300 километр тăршшĕне самолет çул çинче сехетне 300-шер километр ытла туса вĕçсе тухнă.

Хăйуллă льотчиксене Новосибирскри партипе совет организацийĕсен, обшчĕствăллă организацийĕсен руководителĕсем тата çар командованин представителĕсем кетсе илнĕ.

Герой-льотчиксен сывлăхĕ пит те лайăх. Самолет чăсĕсем вĕçевре пĕр кăлтăксăр лайăх ĕçленĕ.

Ăшă тĕлпулу хыççăн льотчиксем хулана канма кайнă.

(ТАСС).

Пайан, 1938 çулти ийулĕн 15-мĕшĕнче, вырăссен чаплă геологĕ, ССР Союзĕн Ăслăлăхсен академин президенчĕ академик Александр Петрович Карпинский вилнĕренпе икĕ çул тулчĕ.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: академик Александр Петрович Карпинский.

Александр Петрович Карпинский

(Вилни икĕ çул тултарнă тĕле)

1936 çулта ийулĕн 15-мĕшĕнче ССР Союзĕн Ăслăлăхсен академин президенчĕ академик Александр Петрович Карпинский вилнĕ. Сталинпа Молотăв йулташсем Карпинский вилни „пĕтĕм совет ăслăлăхĕшĕн тата ССР Союзĕнчи ĕççыннисемшĕн йăвăр çухату пулса тăрать“, тесе çырнă.

Вырăссен калама çук чаплă учонăйĕ Александр Петрович Карпинский 1847 çулти йанварĕн 7-мĕшĕнче Уралта Богословск савăтĕнчи сăрт-ту инженерĕн çемйинче çуралнă. 1866 çулта Петербургри сăрт-ту институтĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн Урала кайнă, кунта вăл хăйĕн практикăлă тата ăслăлăх ĕçне пуçласа йанă.

1868 çулта Петербургри сăрт-ту институтĕнче диплом панă хыççăн Карпинские геологи кафедри тăрăх адйутант пулса ĕçлеме чĕнсе илеççĕ. Талантлă çамрăк учонăйа часах кафедрă профессăрне суйлаççĕ. Александр Петрович 1882 çулта уçнă Геологи комитетне пуçласа йаракансенчен пĕри пулнă. 1885 çултан пуçласа Карпинский 18 çул хушши Геологи комитечĕн директăрĕ пулса ĕçленĕ, унтан унăн хисеплĕ директăрĕ пулнă.

А. П. Карпинские Ăслăлăхсен академин действительнăй членне суйлани 1936 çулти февралĕн 7-мĕшĕнче 50 çул тултарнă. Карпинский 20 çул хушши, мĕн виличчене, Академин президенчĕ пулса ĕçленĕ.

Пирĕн çĕршыври пысăкран та пысăк ăслăлăхла-обшчĕствăлла деятель академик А. П. Карпинский çав вăхăтрах пĕтĕм тĕнчипе паллă учонăй пулнă. Вăл Йевропăпа Америкă çĕршывĕсенчи нумайĕш ăслăлăх академисен хисеплĕ академикĕ тата член-корреспонденчĕ шутланса тăнă, ССР Союзĕнче те тата йут çĕршывсенче те геологилĕ тата ытти ăслăлăхла пит нумай обшчĕствăсен членĕ пулнă.

Карпинский геологи çинчен 300 ытла хаклă ĕç çырнă. Ăна тивĕçлипех совет геологин ашшĕ тесе шутлаççĕ.

Хăйĕн пурнăçĕн йулашки çулĕсенче те, 90 çула çывхарса çитнĕ пулсан та, Карпинский ăслăлăх ĕçне тума чарăнман, ССР Союзĕн Ăслăлăхсен академи ĕçне йертсе пынă, хăйĕн социалисăмлă тăван çĕршыв пурнăçĕпе чĕррĕн интересленнĕ.

А. П. Карпинский калама çук паллă обшчĕствăлă деятель пулнă, ăна мĕлйуншар ĕççыннисем сывăх пĕлсе тăнă. Советсен Пĕтĕм Союзри VII-мĕш съесĕнче 1935 çулта Карпинские ССРС Тĕпĕçтăвкомĕн членне суйланă.

А. П. Карпинский совет çамрăкĕсене йуратнă, вăл вĕсем çине пысăк шанăç хунă. Вăл ПСÇЛКС X-мĕш съесĕнче тухса каланă сăмахĕнче çамрăксене ăслăлăха вĕренме чĕннĕ.

Микулай патша саманинчи тĕксĕм çулсенче çуралса, самодержави пусмăрĕнче халăхсем асапланнине курнă Карпинский пирĕн çĕршывра социалисăм çĕнтериччен пурăнчĕ, вăл ССР Союзĕн Сталинла Конституци пройектне хĕрӳллĕн саламларĕ.

Калама çук паллă учонăй тата обшчĕствăллă деятель А. П. Карпинский ăслă вырăс халăхĕпе хăйĕн ытарайми паха социалисăмлă тăван çĕршывĕн шанчăклă ывăлĕ пулнă.

Совет халăхĕ Карпинский йатне пысăккăн хисеплесе асăнать.

РСФСР Верховнăй Совет депутачĕсем Мускава тухса кайрĕç

КАНАШ (хамăр корр.). ЧАСС Республикĕнчен РСФСР Верховнăй Совечне суйланă депутатсем З. А. Андрейĕва, И. В. Дубăв, П. И. Калинкина, Л. Д. Острйаков, А. А. Малинин, А. В. Сомăв, Е. А. Антонăвă йулташсем ийулĕн 13-мĕшĕнче Мускава РСФСР Верховнăй Совечĕн пĕрремĕш Çессине тухса кайрĕç.

Депутат Острйаков йулташ сирĕн корреспондентпа калаçнă чухне çапла пĕлтерчĕ:

— Пирĕн „Хĕрлĕ Туçа“, çывăхри Кирăв йачĕпе тăракан тата „Çăлтăр“ колхозсем ийулĕн 12-мĕшĕнче ыраш вырма тухрĕç. Епĕр тырпулсене пухса кĕме тĕплĕн хатĕрлентĕмĕр. 30.700 пăт кĕрекен тырă хумалли çĕнĕ склад турăмăр, дезинфекцилесе хатĕрлерĕмĕр. Ийулĕн 12-мĕшĕнчех иртнĕ çулхи тырăран государствăна тăратас шутпа Йĕпреçе 60 центнер леçрĕмĕр. Кашни бригадăн пĕрер жнейкă пур, колхоз пĕтĕм тырра машинăсемпе пухса кĕме хатĕрленчĕ. 100 гектар комбайнпа пухса кĕме договăр тунă. Халĕ комбайн „Çăлтăр“ колхозра ĕçлет-ха, унтан пирĕн колхоза пырать. Кăçал пурĕ 620 гектăр тĕш тырăсем пухса кĕмеле. Ыраш иртнĕ çулхинчен кайа мар пухса кĕме шанăç пур. 20 центнĕртан кайа пухăнмĕ тесе ĕмĕтленетпĕр.

Колхозниксем, РСФСР Верховнăй Совечĕн Çессийĕ хупăннă тĕле ыраш пухса кĕретпĕр, терĕç.

Халăх ман çине пысăк шанăç хучĕ. Епĕ Мускавран килсен хамăн суйлавçăсене çессă ĕçĕ çинчен каласа паратăп.

Епĕ Мускавра 1935 çулхи декабĕр уйăхĕнче пултăм. Ун чухне Сталинпа тата унăн çывăх соратникĕсемпе тĕл пултăм. Халĕ иккĕмĕш хут вĕсемпе тĕл пулатăп, ку маншăн пысăк савăнăç.

Т. Майорăв.

Вăйлă тырпула кĕске срукра, пĕр тăкаксăр пухса кĕрер!

Лайăх ĕçлекенсемпе пĕрлех йулса пыракан колхозсем пур

Чăваш республикĕн делегацийĕ пилĕк бригадăна уйăрăлса, Тутар республикинчи 11 районта пулчĕ. Манăн бригадă Шереметйевскипе Чистопольски районĕсенче пулса, 7 колхоза тата 3 МТСтанцине тĕрĕслесе тухрĕ.

Чистопольски районри Вахитăв йачĕпе тăракан колхозпа Шереметйевски районри „Заветы Ильича" колхоз—малта пыракан колхозсем. Кунта мĕн пур колхозниксем социалисăмлă ăмăртса ĕçлеççĕ. Колхозĕсем çеç мар, кашни бригадă пĕр-перинпе ăмăртаț. Колхозниксем виçĕ республикă ăмăртăвĕнче мала тухасшăн, чăннипех сталинла пысăк тухăçлă тырпул туса илесшĕн кĕрешеççĕ.

Кашни кунхи ĕç результачĕсене колхозниксен массине пĕлтерсе тăни—социалисăмлă ăмăртăва конкретлăрах тăваț. Çак икĕ колхозра çураки вăхăтĕнче те тата çум çумлана чухне те кашни колхозник ĕç нормине мĕн чухлĕ тултарнине кунсерен учота илсе пурте курăнмали вырăна кăларса çапнă. Çапла тунипе ăмăрту результачĕсем куçкĕски çинчи пек курăнса тăраççĕ. Ку пирĕн Чăваш республикинчи чылай колхозсемшĕн пример пулмала.

Çуракине калама çук пысăк организацилĕхпе ирттернĕ. „Заветы Ильича" колхоз 8 кунта, Вахитăв йачĕпе тăракан колхоз 9 кунта акса пĕтернĕ. Вахитăв йачĕпе тăракан колхозăн вунвиçĕ сейалкă. 13 ретлĕ сейалкăпа нормă тăрăх 8 гектар акмала пулнă, вĕсем кашни кун 10 шар гектар акнă.

Херарăмсене ĕçлеме колхозсенче лайăх условисем туса панă. Икĕ колхозĕнче те ача плошадки тата ача сачĕ пур.

Çуракине пĕтĕм агротехникă правилисем тăрăх пысăк пахалăхпа ирттернине пула тата тырпулсене çумкурăксенчен тасатсах тăнипе Чистопольски районра тырпул пит чаплă ÿснĕ. Колхозниксем тăрăшса ĕçлени ахаль çухалман. Социалисăмлă ăмăрту хăйĕн результачĕсене пачĕ.

Халь ĕнтĕ ăнса пулнă тырпула большевикла хатĕрленсе пухса кĕмеле, çÿлте асăннă икĕ колхоз тырпула пухса кĕме хатĕрленес йенĕпе те лайăх ĕçлеççĕ. Машинсене йалтах йусаса лартнă. Ĕç планĕсем тунă. Витнĕ итемсем хатĕр.

Çав хушăрах епĕр çак икĕ районра чылай начар ĕçлекен колхозсене те куртăмăр. Акă, Шереметйевски районри „Красный партизан" колхоз тырпула пухса кĕртме пачах хатĕр мар. Колхозăн 64 лашана кÿлме йурăхлă урапа пĕтĕмпе те 5 çеç. 1.106 гектар çинчен тырă вырмала. Вĕсем 70 мих кăна хатĕрленĕ. Амparсем çук. Клешчсемпе кĕрешмеççĕ.

Чистопольски районра 193 бригадăн 110 витнĕ итем шутланаț, анчах пĕрне те тасатса йусаса хуман.

Епĕр пулнă виçĕ МТС та тырпула пухса кĕртме начар хатĕрленеççĕ. Красно-Каткински тата Чистопольски МТС-сем 22 молотилкă йусаса пĕтермен, 60 комбайнран 11 комбайн çеç йусанă.

Çумкурăксемпе кĕрешесси начар пыраț. Шереметйевски районри „Красный партизан", „Память Ленина", „Кайнлы" колхозсенче техникăлă культурăсем—мăкань, йĕтĕн, цикори, вир, чина—çум айне пулнă. Уйрăмах „Кр. партизан" колхозăн 60 гектар вир, 20 гектар йĕтĕн тата пăрça-йасмăк йалтах çум айĕнче пĕтнĕ тесе калас пулаț.

Çĕртме сухи тăвассипе те кайа йулнă. Икĕ районра та МТС-сем начар ĕçлени палăраț. Чистопольски МТС 8.200 гектар çĕртме тумала пулнă, ийунĕн 1-мешне 5 355 гектар çеç сухаланă. Мулосински МТС тракторисĕсем çĕртме сухи тунă чухне пĕлтĕр комбайнпа вырнă тулă уламне касă айне тумасăрах хăварнă. Çавăн пек уламсем лавĕ-лавĕпе купара выртаççĕ, вĕсене никам та салатса пăрахман. Çĕртме тунă чухне трактăрсем вĕсенчен пăрăнса ирттсе кайнă. 504 гектар лаптăк çинче çавăн пек улăм куписем выртаççĕ.

Колхозсем тислĕкпе тулса ларнă, анчах ăна уй-хире кăлармаççĕ. Чистопольски районра 258 пин лав тислĕк кăларас вырăнне 124 пин лав, Шереметйевски районра 550 пин лав вырăнне 148 пин лав çеç кăларнă. Лайăх ĕçлекен колхозсем те тислĕке хакламанни сисĕнет.

Çак çитменлĕхсем вĕсем районсенчи çĕрçĕ пайĕсемпе МТС-сем колхозсене çителĕклĕ йĕртсе пыманнинчен килеççĕ. Çĕрçĕ органĕсем социалисăмлă ăмăртăва пуçарса пыракансем пулса тăрайман-ха.

А. Çтепанăв.
Йелчĕк МТС-ĕн аслă агрономĕ.

Ыраш вырма тухнă колхозсем

ПАТĂРЙЕЛ, ийулĕн 14-мĕшĕ (телефонпа). Кĕрхи тырăсем вырмала пулса çитрĕç. Ĕнер „Хĕрлĕ Туçа" колхозра пур бригадăсем те суйласа ыраш вырма тухрĕç. Çав кун вĕсем пурĕ 20 гектар вырнă. Кив Ахтпÿрçри «Рой» колхоз та ĕнерех ыраш вырма тухнă. Малтанхи кунах пĕрлешÿлĕ столовăй ĕçлеве.

Тырă вырма тухакан колхозсен хисепĕ ÿссех пыраț. Пайан Шмидт, Кирăв тата Красин йачĕпе тăракан колхозсем ыраш вырма тухрĕç.

ИКĔ РАЙОН КАНАШЛĂВĔ

Тăвай — Вăрмар

Вăйлă тырпулшăн, йышлă выльăх-чĕрлĕхшĕн Тăвай районĕпе Вăрмар районĕ пĕр пĕринпе социалисăмлă ăмăртса ĕçлеççĕ. Ăмăрту догăварне пурнăçа мĕнле кĕртсе пынине тĕрĕслене хыççăн, ийулĕн 10-мĕшĕнче Тăвайра çак икĕ районăн представителĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ.

Кăçалхи тырпула пухса кĕме хатĕрленес ĕçе илсен, Тăвай районĕнче вăл ĕç çапла тăраț: Йенĕш Нарвашри „Красная Чувашия" колхоз уй ĕçне тухма лайăх хатĕрланнĕ. 14 бригадăра 43 звено организациленĕ. Кашни бригадăрах политвулавçăсем уйăрса хунă. Колхоз амparсене пĕтĕмпех тасатса дезинфекциленĕ. Жнейкăсемпе лобогрейкăсене йусаса хатĕрлесе хунă. Çурласем, лаша кÿлмели таврашсем çителĕклĕ.

Ку колхоз лайăх ĕçлекен колхозсенчен пĕри. Анчах та, Тăвай районĕнче хатĕр мар колхозсем те чылай. Çĕнĕ Пуйанкассинчи, Кивĕ Пуйанкассинчи, Чукçырмари, Уланкăри, Вăтайелри, Тĕмерти тата Тăвайри колхозсем—чи кайа йулса пыракансем. Районĕпе 196 жнейкăран 96 жнейкă çеç йусанă пулсан, йусаманнисенчен чылайĕшĕ çав колхозсем çине кĕрет.

Вăрмар районĕнче те хатĕрленсе çитмен колхозсем чылай. „Хĕрлĕ Кетнă" колхоз çеç лайăх тĕслĕх кăтартаț. Ку колхозра 5 жнейкă. Вĕсене тата молотилкăсемпе сортировкăсене пурне те йусаса хатĕрленĕ. Ĕç çинче ачасен йаслийĕ тата столовăй пулаț. Халь колхоз пурĕ 105 гектар çинчен викă, клевĕр тата улăхри курăк çулса утăсене капана хывса лартнă. 80 тоннă силос хывнă.

Канашлу выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç мĕнле пынине те пăхса тухрĕ. Ку ĕçре те чылай çитменлĕхсем палăртрĕ. Çав çитменлĕхсене пĕтерме тата тырпулсене пухса кĕртес ĕçре кайа йулнă ĕçсене туса çитерме мĕн-мĕн тума кирлине кăтартса пачĕ.

В. Илйин.

Ыраш вырас ĕç пуçланчĕ

ЙЕЛЧĔК, ийулĕн 14-мĕшĕ. Патрекелĕнчи «Осоавиахим» колхоз 1938 çулхи тырпулсене пуçтарса кĕме лайăх хатĕрленсе çитнĕ. Ĕнер, хĕвел тухнă тухманах, 2-мĕш бригодă ыраш вырма тухрĕ. Кашни бригадăрах жнейкăсем те ĕçе тытăннă. Машиновед Захарăв йулташ иртнĕ çулта жнейкăпа пĕр çенăра 6—7-шер гектар вырнă пулсан, кăçал вăл 7—8 гектартан кайа мар вырма обйазательствă илчĕ.

Тыра вырма тухиччен икĕ кун малтан бригадăсенче çтена хаçачĕсем кăларнă. 2-мĕш бригадăра ĕнер „Вăйлă тырпулшăн" çтена хаçачĕ (редактăрĕ Молостов йулташ) тепĕр номĕр тухрĕ.

Кунта культмассăлă ĕçе те лайăх йĕркеленĕ. Кашни бригадăра хаçатсем вулама 2-шер çын уйăрнă. Иккĕмĕш бригадăра ĕнер кăнтăрлахи кану вăхăтĕнче вулавçă Йастребăвă йулташ щербиновецсем социалисăмлă ăмăртăва тухма чĕнсе каланине вуласа пачĕ. Çавăн хыççăн, щербиновецсем чĕнсе каланине сÿтсе-йавсан, колхозниксемпе колхозницăсем тырпулсене кĕске срукра пухса кĕме пĕтĕм вăйа хурса ĕçлеме пулчĕç.

Кĕрхи тырăсене—197 гектар ыраш тата 19 гектар кĕрхи тулă вырмала. Çав лаптăка вĕсем 4,5 кун хушшинче вырса кĕртме пулчĕç. Ĕнер пиççе çитнĕ вырăнсене суйласа пурĕ 18 гектар вырнă.

Иванов. Çеменăв.

Ăмăрту плана тултарма пулăшрĕ

ВĂРНАР. Пинер вăрманпункчĕ иккĕмĕш квартăл планне ытлашшипех тултарчĕ. План тăрăх 4 000 кубла метр йăвăç касса хатĕрлемеле тата 2.000 кубла метр турттармала пулнă пулсан, 4 335 кубла метр хатĕрлесе 2.521 кубла метр турттарнă (126 процент).

Плана ирттерсе тултарнă май рабочисен ĕçукçийĕ те чылайах ÿсрĕ.

Вăрманпункт ĕçĕ лайăхланни мĕнрен килчĕ-ха? Чи малтанах социалисăмлă ăмăртăва анлăн сарса йани пысăк пулăшу пачĕ. Кунта кашни бригадă, кашни рабочи пĕр-перинпе ăмăрту догăварĕ туса ăмăртса ĕçленĕ, догăварсене йаланах тĕрĕслесе пынă. Тата час-часах бригадăсенче пухусем, канашлусем туса малта пыракан бригадăсен, стахановецсен паха опычĕсем çинчен каласа панă.

Культмассăлă ĕçе те йĕркеленĕ. Каннă вăхăтра бараксенче рабочисем хаçат-журналсем, кĕнекесем вулаççĕ, шашкă-шахмăтла выляççĕ, пурте вĕсем çителĕклĕ.

Вăрман пунктĕнче ĕçлекенсем III-мĕш квартăлта тата лайăхрах ĕçлеме пулчĕç. Ăмăртăва Çарăклă вăрманпунктне чĕнчĕç.

Н. Скворцов.

Государствăна аш-какай тăратас ĕç йулса пыма нимĕнле сăлтав та çук

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1938 çулти февралĕн 2-мĕшĕнче йышăннă хăйĕн решенийĕнче чылай республикăсемпе крайсем тата облăçсем тăрăх государствăна аш-какай тăратас ĕç начар пыни çинчен кăтартса пачĕ. Çав шутран Чăваш республики тăрăх та аш-какай хатĕрлес ĕç пит кайа йулса пыраț. ССР Сойузĕн Хатĕрлев халăх комиссариачĕ апрелĕн 25-мĕшĕнче Чăваш республикинчи уполномоченнăйĕн отчетне итлесе, республикăра аш какай хатĕрлес ĕçĕ малашне те йапăх пырсан, хатĕрлев организацийĕсенче ĕçлекенсен пысăк ответ тытмала пулассине асăрхаттарса хăварчĕ.

ССР Сойузĕн правителстви ийулĕн 5-мĕшĕнче Чăваш республики тăрăх аш-какай хатĕрлес ĕç йапăх пыни çинчен тепĕр хут кăтартса парса, çав ĕçри çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе мĕн-мĕн тума кирлине конкретлăн кăтартса пачĕ.

Чăваш республикĕн правителствипе ПСК(б) Парти Обкомĕ те районсенчи парти тата совет организацийĕсене аш-какай хатĕрлес ĕçре татăклă улшăну тума кирли çинчен темиçе хут та кăтартса панă. Малтанхи çур çул хушшинче çав ыйту тĕлĕшпе кашни район отчотне итленĕ, анчах та, райком çекретарĕсемпе райĕçтăвком председателĕсем тата районсенчи хатĕрлев уполномоченнăйĕсем план тултарма сăмах панă пулсан та, ийулĕн 1-мĕшне нихăш район та çур çул планне тултарса çитереймен.

Ийулĕн 1-мĕшне çур çулхи плана республикипе пĕтĕмпе 41,2 процент таран çеç тултарнă. Хăшпĕр колхозсем малалишĕн аванс шучĕпе панине шута илсен, çур çулхи план 69 процент тулнă шутланаț. Колхозсем йенĕпе плана тултарнă, анчах та колхозниксемпе йединоличниксен хуçалăхĕсем йулса пыраççĕ. Колхозниксем йенĕпе плана 58,4 процент, йединоличниксем—43 процент çеç шутланаț (аванс шучĕпе панипе пĕрле).

Калас пулаț, колхозниксенчен чылайĕшĕ тата уйрăмăнах йединоличниксем 1938 çулти малтанхи çур çул хушшинче государствăна аш какай тăратас ĕçе пачах хутшăнмасăр йулнă.

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б) Парти Тĕпкомĕ 1938 çулти апрелĕн 19-мĕшĕнче йышăннă постановленире государствă умĕнчи обйазателствăсене тултарса пырас ĕçре йединоличниксене колхозниксенчен ытларах çăмăллăхсем памалă мар тесе кăтартса панă. Районсенчи хатĕрлев организацийĕсенче ĕçлекенсем çав постановлени çинчен маннă пулас. Урăх нимĕнле сăлтавпа та ăнланма çук йединоличниксем колхозниксенчен кайа йулса пынине, йединоличниксенчен государствăна памали аш какайа саккун хушнă тăрăх шыраса илменнине.

Аш какай хатĕрлес йенĕпе уйрăмăнах Сĕнтĕрвăрри, Вăрмар, Вăрнар, Хĕрлĕ Чутай, Йĕпреç, Туркан, Елĕк районĕсем пит йапăх ĕçлеççĕ. Çавăн пекех „Заготскот" контори те аш какай хатĕрлес ĕçри çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшне начар ĕçлет. Вăл çеç-те мар, „Заготскот" районсене ĕçе пăтратакан кăтарту—хатĕрлев пунктисенче вăтам ÿт-тирлĕ мар выльăхсене илмеле мар, тесе кăтарту панă. Кун пек йĕрке колхозсенчен тăратакан выльăхсемшĕн çеç пулмала, колхозниксемпе йединоличниксенчен пыракан сывă выльăхсене пурне те илмеле, вĕсене хатĕрлев пунктисен базисенче самăртмала.

„Заготскот" хатĕрлев пунктисемпе базăсене те йĕркелĕ туса çитермен, айакри районсенче (Йелчĕкре, Шăмăршăра, Куславккара) уйрăм пунктсем организацилемен. Çавăнпа пĕрлех базăсем валли выльăх апачĕ хатĕрлес ĕç те пит йапăх пыраț-ха.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б) Парти Обкомĕ 1938 çулти ийулĕн 8-мĕшĕнче аш-какай хатĕрлев ĕçĕ çинчен уйрăм постановлени йышăнса, райĕçтăвкомсене, районри хатĕрлев уполномоченнăйĕсене тата йалсоветсене 1938 çулăн малтанхи çур çулхи плана ийулĕн 20-мĕшне пĕтĕмпех тултарса çитерме хушрĕ. Çав шутпа ийулĕн 10-мĕшĕнчен пуçласа ийулĕн 20-мĕшне çитиччен кашни йалтах государствăна аш-какай тăратас ĕç мĕнле пынине тĕрĕслесе тухмала. Çав вăхăт хушшинче йулнă недоимкăсене пĕтĕмпех—1937 çулшăн та, 1938 çулхи çур çулшăн та саккун хушнă тăрăх шыраса илмеле.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б) Парти Обкомĕ райĕçтăвкомсене, райкомсене тата районсенчи Хатĕрлев уполномоченнăйĕсене государствăна аш-какай тăратас ĕçре августăн 1-мĕшне çитиччен çитменлĕхсене пурне те пĕтерме хушрĕç, малашне—ийуль, август тата çентабĕр уйăхĕсенче квартăл планне пĕтĕмпех тултарса пымалине кăтартса пачĕç.

Хăйсен сăмахне пурнăçа кĕртрĕç

Ишек йалсовечĕ (Ишлей районĕ) Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçул строителствине активлăн хутшăнса ĕçлет. Йалсоветре кĕрекен колхозниксемпе йединоличниксем кăçал хăйсем тумали ĕçсене хăварт пурнăçа кĕртрĕç. Хальхи вăхăтра строителствăра 47 колхозник 11 лашапа ĕçлеççĕ. Уйрăмăнах А. Лукоянов тата Толбайев йулташсем пысăк тĕслĕхсем параççĕ. Вĕсем кулленхи нормăна ытлашшипех тултарса пыраççĕ.

А. Наумăв.

Китай халăхĕн паттăр кĕрешĕвĕ

Акгли журналисĕ Д. Бертрам Китай партизанĕсем тата Китайăн 8-мĕш революцилĕ Халăх çарĕн чаçĕсем вăрçнă районсенче пулнă. Бертрам очеркĕсене Америкăн „Эйша" йатлă журналĕнче пичетлесе кăларнă.

Кунта епĕр Д. Бертрам очеркĕсен сыпăкĕсене пичетлетпĕр.

... Епĕр дивизи штабĕнче тăраттăмăр, штаб Шаньси провинцин çурçĕр пайĕнче сăрт-тулă вырăнта вырнаçнă. Штаба кашни кун пыракан пĕлтерÿсенчен çакă курăнаț: йапонецсем Таййуане кайакан çулсене арăн-арăн тытса тăраççĕ.

Епĕр, хамăн йулташпа-китайецпа пĕрле, фронта тухса кайрăмăр. Кайасса йуланутпа кайрăмăр Малтанхи кун пирĕн Шаньсири кавалери дивизийĕ тытса илнĕ хулара çĕр каçмала пулчĕ. Епĕ дивизи командирĕпе Чао Цин—Чжоупа—Китай генералĕпе кăмăла каймалăх калаçрăм. Вăл мана çав тери хапăл турĕ, вăл çапла каларĕ:

— Епĕр, китайĕцсем, çак вăрçăра нумайа вĕрентĕмĕр, 8-мĕш çартан та чылай вĕрентĕмĕр. Епĕ хам та пачах урăх çын пулса тăтăм.

Йулашки сăмахĕсене вăл аллине чĕре çумне тытса каларĕ.

Çакă вăл пĕтĕм халăх фрончĕн калама çук чаплă примерĕ пулса тăраț те ĕнтĕ! 8-мĕш çар командăвнийĕ те: генерал „политикă тĕлĕшĕнчен йусанчĕ" тесе йышăнаț.

* * *

Ытла пысăках мар йалта пире партизансен отрйачĕн командирĕ—8-мĕш çар инструктăрĕ кĕтсе илчĕ. Йалти халăхсем хушшинчи ĕç çинчен каласа кăтартнă чухне вăл çапла каларĕ:

— Пуйансенчен çакна ыйтатпăр епĕр: вĕсем пире укçа-тенкĕсем тата продуктăсем парса пулăшчăр. Йалти тытăм пуçĕнче помещик лараț пулсан тата вăл укçа-тенкĕсемпе продуктăсем пухассинчен пăрăнаț пулсан, епĕр вара тытăм системине йалтах улăштаратпăр, ăна епĕр тата ытларах демократилĕ туса хуратпăр, старшинăна суйлама çынсене хăйсене хушаттăр.

— Помещиксем хăйсене мĕнле тыткалаççĕ-ха?

— Тĕрлĕрен пулаççĕ. Вĕсем хушшинче патриотсем те тĕл пулаççĕ, вĕсем пирĕнпе хаваслансах килешеççĕ. Тĕслĕхрен, Гоçйан çывăхĕнче пĕр пуйан помещик пурччĕ, йапонецсем ăна пукане йĕвĕрлĕ правителствăна кĕме хушнă. Анчах, вăл хăй ăшĕнче Китай патриочĕсем майлă пулнă, пирĕннисене пулăшнă. Пирĕн çарсем çав йал патне пырса çитсен, вăл сана илнĕ те пирĕннисемпе пĕрле похода кайма килĕшнĕ. Анчах вăл хăй питĕ ватăскер пулнă, унпа пĕрле унăн ывăлĕ те пынă. Кайрантарахпа унăн ывăлне йапонецсем вĕлернĕ. Пирĕн çарсем унăн кĕлеткине вышĕн килне илсе пырсан, старик пĕр тумлам куççулĕ те кăларман, вăл çапла каланă çеç: „Манăн ывăл мухтавлă вилĕмпе вилчĕ"...

— Йапонецсем чи малтан пырса кĕрсенех,—каласа параț мăнăн командир малала—хресченсенчен укçа-тенкĕ, чăх-чĕпсем тата çамрăк хĕрсем тупса пама ыйтма пуçларĕç!

Малтанах хресченсем вĕсене хирĕç тăрасси çинчен шутламан та пулнă, анчах кайарахпа вĕсем опыт илнĕ, вĕсем захватчиксене хирĕç хĕçпăшалсемпе тăма хăйулăх çитерне.

— Йапонецсемпе пĕрле пынă Монгол çарĕсем Йуанбин çывăхĕнче пурăнакан Ли йатлă хресчене çемйинчи çынсене нумайĕшне тискеррĕн вĕлересе тăкнă. Çав кун çĕрлехине Ли 8-мĕш çар патне пырса, ăна 5 гранатă пама ыйтнă. Ăна гранатăсем панă, гранатсене паричччен малтан ăна вĕсемпе мĕнле усă курмали çинчен тĕплĕн ăнлантарса панă.

Çав вăхăтра партизансем пысăк активлăхпа вăрçнă. Йапонецсем çул кăтартса пыракан çуккипе аврана, меншĕн тесен сăрт-тулă вырăнта Китай партизанĕсене шыраса тупма хĕн пулнă. Ли йапонецсемпе вĕсене çул кăтартса пыраканни пулма килешнĕ.

— Епĕ малта пыратăп, — тесе каланă Ли йапонецсене,—китайецсене курсан, епĕ сире алăпа пăллă туса пĕлтерĕп, унчухне вара сирĕн мэн хыççăн пырас пулаț те вĕсем çине тапăнас пулаț.

Ту çинче Ли вĕсене паллă туса кăтартнă. Анчах та йапонецсем ту çинеле хăпарма пуçласанах, хăйулă хресчен вĕсем çине гранатсем ывăтма тытăннă, гранатсене вăл кĕпе ăшне чиксе пытарнă пулнă. Йапонецсем, пире хупăрласа илчĕç тесе шутланă та, кайала тарма тытăннă.

— Çул кăтартса пыраканнин пурнăçĕ мĕнле?—тесе ыйтрăм епĕ.

Командир кулса илчĕ.

— Ли çавăнта вилнĕ йапонецсене ухтарнă, 4 пин доллар тупнă, вĕсен хĕçпăшалĕсене пуçтарнă та йалтах пирĕн пата илсе килсе пачĕ. Халĕ ĕнĕ вăл 8-мĕш çар бойецĕ.

* * *

Епĕр икĕ çырма хушшинчи çÿлĕ сăрт çине хăпартăмăр. Кунта тăшмана вăрçма çăмăл мар вара. Хресченсем, йапонецсем çывхарса пынине пĕлсенех, апат-çимĕç запасĕсене хăйсемпе пĕрле илсе, тарса пытанаççĕ.

Ирхине командир пире шиклентерекен хыпарсем пĕлтерчĕ. Йапонецсен 2 пин çын кунтала çывхарса пыни çинчен сведенисем илнĕ. Бригадă штабĕ, епĕр ун патне кайаттăмăр, çĕрле паллă мар çĕре тухса кайрĕ. Çакăн пек условисенче çул çÿреме питех те хăрушă.

— Мĕн тумала-ха ĕнтĕ пирĕн?—ыйтрăм епĕ.

— Бригадă командирĕ ăстине пĕлеччен малалах кайăпăр.

Çав ирхине епĕр ытти кунхисенчен малтантарах тытăнтăмăр ĕçе. Вырăнти партизансем пире çул кăтартса пыраканнине пачĕç. Епĕр часах хĕвелтухăçĕнчен тарса тухнисене тĕл пултăмăр. Телейсĕр çемйесем—хĕрарăмсем пĕчĕк ачисене тытса ашаксем çине утланса ларнă, вĕсемпе йунашар — арçынсем, вĕсем çурăмĕсем çине тырă тултарнă михсем йатнă. Çак телейсĕр çынсенчен нумайĕшĕсем „карликсем" (йапонецсем) пырас çине пĕлнĕ, унран тухса тарма çакăнпа та çителеклĕ пулнă.

Бригадă штабĕ пысăк чул сăрчĕсем патĕнче ларакан пĕр пĕчĕк йалта тăнă.

— Есĕр лайăххăнах çитрĕр-и?—ыйтрĕ пирентен бригадă командирĕ.—Ĕнерпе пайан çакăнта çапăçусем пулса иртнине пĕлетĕр и?

Вăл пире мĕн пулса иртнине темиçе сăмахпах каласа пачĕ.

— Пирĕн бойецсем—вĕсем çĕнĕ хăлăх-ха, вĕсем çар ĕçне виçĕ уйăх хушши çеç вĕреннĕ. Хресченсен çипуçĕсене тăхăннăскерсем, вĕсем йапонецсене хирĕç вăрçнă, пистолетсемпе гранатăсене кĕпе йе тумтир аркисем ăшне пытарнă. Йапонецсем, çав хресченсем йури çавăн пек тумлантарнă бойецсем мар тесе шутласа, вĕсене хăйсен çывăхнех илсе пынă. Пирĕннисем вара пеме пуçланă. Йапонецсем авраса ÿкнĕ, вара пĕр сехет хушшинчех çапăçусем пирĕннисем çĕнтернипе пĕтнĕ. Епĕр йапонецсене çĕр çынна йахăн вĕлертĕмĕр тата амантрăмăр.

* * *

Ирсерен епĕр салтаксемпе калаçаттăмăр йе ачасен драмкружокне çÿреттĕмĕр. Мана çамрăк артиссем пит тĕлĕнтерчĕç. Вĕсенчен чи çамрăкки—вунă çулта. Вăл çарпа пĕрлех Гуйчжоуран килнĕ. Ачасем ташăсене лайăххăн хатĕрленнĕ. Çамрăк ташăçсене 17 çулхи студенткă йертсе пыраț, вăл, 8-мĕш çар çумне хутшăнас тесе, Бейпинра вĕренме пăрахнă.

Епĕр пропагандăсем тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен уйăрма кĕтĕмĕр, унта пĕр çамрăк студент, Йапонирен таврăннăскер, Йапони чĕлхипе çырнă листовкăсем хатĕрленĕ, çав листовкăсене вара хресченсем тăшман тытса илнĕ хуласенче салатаççĕ.

— Захватчиксем,—терĕ мана бригадă командирĕ Ван,—халĕ ĕнтĕ пĕтĕм шанчăка пысăк хуласемпе çимĕçсем лайăх ÿсекен тÿрем вырăнсене çавăрса илесси çине хураççĕ. Çавсене тытса илнĕ хыççăн вĕсем пире сăрт-тулă вырăнсене хĕссе кĕртме шутлаççĕ, вĕсен шучĕпе, епĕр вара унта çимĕçсем çитменнипе антрамала тата хамăр ретсене çĕнĕ доброволецсемпе тултарма пултарайас çук. Анчах партизансем кашни каçах сăрт-тусенчен айалала, тÿрем çĕре анса, йапонецсен коммуникацийĕ тĕп линийĕсем патнех çитеççĕ. Час-часах çапла пулаț: пĕр бойец, хресчен тумĕпе тумланнăскер, çул айаккине кĕрсе выртса, гранатăсене хатĕр тытса тăраț. Йапони грузовикне курсан, вăл ун çине гранатă ывăтаț, гранати тата грузовикăн чи вăта пайнех лекет. Çакăн хыççăн бойец айакалла тарса çăланма та ĕлкĕрет.

— Мĕн кирлине йалтах: хĕçпăшалсене тата вăрçăра кирлĕ ытти хатĕрсене тăшмантан хăйĕнчен туртса илме май пуррине епĕр хресченсене кăтартса патăмăр та ĕнтĕ,—терĕ малала командир.

* * *

8-мĕш çарăн кашни чаçĕнчи бойецсем (фронтра та!) кунне икĕ сехет класри занятисене çÿреççĕ. Пĕр сехетĕнче политзанятисем туса ирттереççĕ, теаринче—хăйсен культурăлă пĕлÿне ÿстерме вĕренеççĕ. Хутла пĕлменнисене чи малтан латин шрифтне вĕрентеççĕ, Китай коммунисĕсем ăна пуçламĕш шкул программине кĕртнĕ, унтан Китайăн авалхи иероглифне вĕрентеççĕ. Çамрăк бойецсене урăх çĕршывсем çинчен, вĕсен горизончĕ çинчен каласа параççĕ, халиччен çав горизонта Шаньси çÿлĕ сăрчĕсем картласа тăнă.

Пĕр пайĕнче Китайри мĕн пур провинцисенчи рабочисемпе хресченсем пурăнаççĕ. Вĕсемпе йунашар Йапоние хирĕç кĕрешмели фронта хутшăнас тесе кăнтăртан, Йанцзы шывĕ урлă каçса килнĕскерсем пурăнаççĕ. Шаньсири çамрăк бойецсем çавсене курса, тен ку пирвайхи хут, Китайри мĕн пур провинцисен пĕтĕмĕшлĕ интересне ăнланса илме тытăнаççĕ.

Салтаксен клубĕсенче музыкă, спорт кружокĕсем ĕçлеççĕ. Бойецсем популярлă çтена хаçатсем кăларас çĕре хутшăнаççĕ. Драмкружока та хутшăнма пулаț. 8-мĕш çарăн бойецĕсем вĕсен çарĕнче офицерсемпе салтаксем хушшинче социаллă уйрăмлăхсем çуккине, командирсем вăрçăра йăвăрлăхсене бойецсемпе пĕр тавах тÿссе ирттернине лайăххăнах кураççĕ.

Каçхине пире драмкружок лартакан спектакăле курма пыма чĕнчĕç. Спектакль тултах пулчĕ. Çанталăк сивĕ тăни салтаксемпе хресченсене хăратаймарĕ.

Епĕр естрадă умĕнче лартăмăр, ун пек естрадă Китайри хуласемпе йалсенче чылайĕшĕсенче пур, ытти чухне вĕсенче официаллă ларусем пулаççĕ.

Чи малтан спектакăле ачасем пуçларĕç. Вĕсен ташшисене тăвăллăн алă çупса хапăл турĕç. Программăна йатарласах çакăнта курса лараканссем валли туса хатĕрленĕ. Йапони офицерĕн ролĕнче выляакан актор хăйĕн сăнне Китай халăхĕн авалхи „тăшманĕн" сăн-пичĕ пек сăрланă. Пĕессăсем кĕске те пурне те ăнланмала. Çакă вăл питĕ чаплăскер пулчĕ. Йулашкинчен Китай халăхĕн „Падение лотоса" текен авалхи кĕввипе „чухăн ташшине" ташласа пачĕç. Ку кĕвве Çурçĕр Китайри пур хуласенче те илтме пулаț. Анчах та авалхи йурăва хальхи вăхăтра çĕнĕ сăмахсем кĕнĕ, вăл сăмахсене пурте асра тытаççĕ.

„Кам захватчиксемпе кĕрешес тет—ĕçе тытăнтăр!"

Ăна хор çапла йурласа ответ параț:

„Мĕн пур Йапони вăрăхурахĕсем те чăтса тăраймĕç
Пирĕн тимĕр чышкăсен вăйне".

Парти пурнăçĕ

Отчотпа суйлав пухăвĕн решенине пурнăçласа пымала

ТĂВАЙ. Тĕмерти Смидович йачĕпе хисепленсе тăракан колхоз çумĕнчи парти кандидачĕсен группин отчотпа суйлав пухăвĕнче коммуниссем организацири çитменлĕхсене тĕплĕн тишкĕрсе тухрĕç. Парти пухăвĕсем вăхăтра пулманнине, парти кандидачĕсен группийĕ комсомол организацине йертсе пыманнине тата хăшпĕр коммуниссем парти вĕренĕвĕнчен пăрăнса çӳренине кăтартса, хытă критиклерĕç. Парти кандидачĕсен группин ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе коммуниссем çĕнĕ руководителе нумай предложенисем парса хăварчĕç, татăклă улшăну тума хистерĕç.

Унтанпа чылай вăхăт иртрĕ пулин те, колхоз çумĕнчи парторганизаци отчотпа суйлав пухăвĕнче кăтартса хăварнă çитменлĕхсене пĕтерессипе ĕçре татăклă улшăну туман.

Кандидатсен группин руководителĕ Николайĕва йулташ пухура кăтартса хăварнă çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе тăрăнăн шухăшласа пăхман, вăл ыйтăва пысăк политикăлă ĕç вырăнне хуман.

Пайанхи кунччен те парти кандидачĕсен группийĕ отчотпа суйлав пухăвĕччен пулнă çитменлĕхсене, йанăшсемпе кăлтăксене халĕ те большевикла тӳрлетме тытăнман. Парти пухăвĕсем суйлав хыççăн пĕрре те пулман-ха. Парти организацин тепĕр задачи вăл—организаци йышне ӳстересси пулмала. ПСК(б)Парти Тĕпкомĕ парти ретне çĕнĕрен илме пуçлассипирки кăларнă решени хыççăн пĕр çынна та парти ретне илмен. Виççĕ тăват çул хушши ĕнтĕ ку организацинче парти членĕ—1, кандидат—2, сочувствуйушчи—1 шутланса тăрать. Коммуниссем пĕри те нимĕнле кружокра та вĕренмеççĕ.

Йалта политикăла хуçалăхла ĕçсем йулса пыраççĕ. Çапла пулин те коммуниссем массă хушшинче çителĕклĕ ĕçлемеççĕ. Йалсовет председателĕн заместителĕ Совин, хăй сочувствуйушчи пулсан та, йалсоветне пырса та курмасть.

Хальхи вăхăтра пĕтĕм халăх тырпулсене пухса кĕме хатĕрлевет. Анчах, Смидович йачĕпе тăракан колхозри руководителсем ку ĕç çинчен шухăшламаççĕ те пулас. Колхоз председателĕ Иванов, парти кандидачĕ, уборкăна хатĕрленес тĕлĕшпе начар ĕçлет. Ĕçри ответлăха туймасть.

Коммуниссем массăпа çирĕп çыхăнса ĕçлемеле, отчотпа суйлав пухăвĕн решенине куллен-кунах пурнăçласа пымала.

В. Борисăв.

Парторгпа коммуниссем çинчен

ШĂМĂРШĂ. Чапайĕв йачĕпе тăракан колхозри парторганизацинче парторг пулса Г. Угарин йулташ ĕçлет. Вăл 60 çул урлă каçнă ватă çын пулин те вăй çитнĕ таран хастарлăн ĕçлесе пыма тăрăшать, анчах ăна организацинчи хăшпĕр коммуниссем кирлĕ таран пулăшса пыни курăнмасть-ха.

Парторганизаци умĕнче пысăк ĕçсем тăраççĕ: хирти тырпула пĕр тăккаламасăр вăхăтра пуçтарса кĕрсе патшалăха тырă тăратасси, колхозниксем хушшинче политикăлă агитацине тивĕçлипе организацилесси тата хуçалăхпа политикăла кампанисенче ĕçе пуçарса йертсе пырасси.

Çак ĕçсене ăнăçлăн пурнăçласси вăл пĕтĕмпех—парторганизаци хăйĕн ĕçне лайăх йĕркелесе пынинчен килет. Кашни коммунис партийĕ дисциплинăна çирĕп тытса, пур ĕçре те пример кăтартмала. Анчах, хăшпĕр коммуниссем ку тĕлĕшпе çителĕклĕ ĕçлесе пымаççĕ-ха. Акă, парти кандидачĕ П. Губанов йулташ, çамрăк, ĕçлеме пултаракан çын. Пĕтĕм вăйпа хастарлăн ĕçлесе пымала ĕнтĕ. Анчах Губанов йулташ лайăх ĕçлени пĕрре те курăнмасть-ха. Вăл хăйĕн политикăла пĕлӳлĕхне хăпартассишĕн пĕртте тăрăшмасть. ПСК(б)Парти историне вĕренмели кружока нихçан та йĕркелĕ çӳремест. РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлавне хатĕрленнĕ вăхăтра та суйлавçăсене суйлав саккунне тата Сталинла Конституцине вĕрентес тĕлĕшпе çителĕклĕ ĕçлемерĕ.

Çĕвĕ Чукал йалсовечĕ хуçалăхпа политикăлă ĕçсене пурнăçлассипе районра кайа йулса пырать. Парторганизацинчи коммуниссем хăйсен активлăхне, пултарулăхне темиçе хут ӳстерсе, тимлĕн ĕçлесе пымала. Губанов йулташăн коммуниссемпе пĕрле çак умра тăракан пысăк задачăсене вăхăтра тата кăтартулăн пурнăçлас çĕрте малти ретре пулмала.

Парти ретне ӳстерес тĕлĕшпе те ку парторганизаци çителĕклĕ ĕçлемест, кăçал пĕр çынна та парти ретне илмен. Парторганизаци ĕçне пĕтĕмĕшпе илсе пăхсан питĕ нумай çитменлĕхсем пурри курăнать.

ПСК(б)Парти Шăмăршă райкомĕн Чапайĕв йачĕпе тăракан колхозри парторганизаци ĕçне лайăхлатса йарас тĕлĕшпе ĕçлемеле, ăна кулленех пулăшу парса пымала.

Кашни коммунисăнах парторга ĕçре пулăшса пыни, парторг панă поручениссене вăхăтра пурнăçлани, ĕçри çитменлĕхсем çинчен пухура сӳтсе-йавса, пуху решенисене кĕске вăхăтра пурнăçлани малти вырăнта тăмала.

Н.

Челейкин йулташ çинчен тĕрĕс çырман

„Чăваш Коммунĕ“ хаçатăн март уйăхĕн 6-мешĕнче тухнă 53 (4866) номĕрĕнче Д Богатайĕв çырнă „Парти Тĕпком Пленумĕн решенине тĕрĕс мар ăнланаççĕ“ йатлă заметкă пичетленсе тухнă. Ку заметкăра: Хĕрлĕ Чутай районĕнчи çутĕçпайĕн пуçлăхне, Челейкин йулташа, ерех ĕçсе ӳсĕрĕлсе çӳренĕшĕн районри учителсен канашлăвĕнче хытă критиклерĕç те, малашне ун пек тума йурамании çинчен каласа хăварчĕç. Йулашки вăхăтра Челейкин—таса шывран та „таса“ пуласшăннипе — хăйне критиклекен учителсене хĕстерме тытăнчĕ. Хăйне критиклекен учителсене ĕçрен кăларса йама материалсем тупасшăн çӳрет. Райçутĕç пайĕн çитменлĕхĕсене критиклекен пур учителсене те:— „Клеветник“, теме хăтланать“,—тесе çырни тĕрĕс пулман. Челейкин йулташ нихçан та ĕçсе ӳсĕрĕлсе çуремен, ун çинчен учителсен районри канашлăвĕнче сӳтсе йавман, çавăн пекех вăл хăйне критиклекенсем çинчен материал пуçтарман, тесе пĕлтерчĕç учителсен профсойузĕн Хĕрлĕ Чутай райкомĕпе ПСÇЛКС райкомĕ.

Ĕнер, 1938 çулти ийулĕн 14-мĕшĕнче, Совет Сойузĕн Геройĕсем М. М. Громăв А. Б. Йумашĕв тата С. А. Данилин Мускавран Çурçĕр полюсĕ урлă Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсене вĕçсе çитни çулталăк çитрĕ.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ (сулахайран сылтăмалла): Совет Сойузĕн Геройĕсем М. М. Громăв, А. Б. Йумашĕв тата С. А. Данилин Америкăра анса ларнă кун (1937 çулти ийулĕн 14-мĕшĕнче) Марчфильдри (Кăнтăрти Калифорни) çар аеродромĕн офицерсен клубĕн сатĕнче. Сойузфото.

Выранти промышлĕннăç Халăх Комиссариачĕ строителства ĕçне йертсе пымасть

Вырăнти промышлĕннăç Халăх Комиссариачĕн кăçал Улатăрти Хуткупăссем тăвакан хапрăка туса пĕтермеле тата Вăрманкасра çĕнĕ кирпĕч савăчĕ тумала. Çирĕплетнĕ срuksем тăрăх ку ĕçсене тума тахçанах тытăнмалаччĕ. Анчах халĕ те тытăнман. Хут купăссем тăвакан хапрăка тунă çĕрте строителства материалĕсем, ĕç вăйĕ çитмест. Çавна пула ĕç çав тери хуллен пырать.

Вăрманкасри кирпĕч савăчĕ тăвасси тата та начар. Тĕрĕссипе каласан ку савăта тума тытăннă теме те çук. Выранти промышлĕннăç Халăх Комиссариатĕнче ĕçлекенсем халĕ те каласупах вăхăта ирттереççĕ. Строителства валли пĕр кубла метр хăйăр, тăм, кирпĕч те хатĕрлемен. Проект та çук. Ĕç вăйĕ пухасси пирки шутласа та пăхман-ха.

Строителства хăçан пуçланать, стройкăра ĕçлеме миçе çын кирлĕ? Выранти промышлĕннăç Халăх Комиссариатĕнче ун çинчен пĕлме çук вара. Çук вĕсем.

Апат-çимĕç Халăх Комиссариачĕ йĕнĕпе те строителства йулса пырать. Кăçал Шупашкар хулинче механизациленĕ арман тумала. Ку армана кăçал туса пĕтермеле. Пайанхи куна строителствăна тытăнман. План тăрăх ку армана тума 270 пин кирпĕч, 250 кубла метр йăвăç т. ыт. те хатĕрлемеле пулсан, 211 пин кирпĕч, 50 кубла метр йăвăç, 144 кубла метр хăйăр, 100 кубла метр чул хатĕрленĕ. Ку йĕнĕпе ĕçсем лайăх пыраççĕ темеле. Анчах укçа çукки ĕçе малала йама чарса тăрать. „Росглавмукомол“ кăçалхи çул пĕтĕмпе те 100 пин тенкĕ кăна укçа панă, 113 пин расхутланă. Çапла вара вăл 13 пин тенкĕ парăма кĕнĕ.

Строителства ĕçĕ йулса пырасси промышлĕннăçăн ăслăлăхпа тĕпчев институтĕнчен те нумай килет. Институт ӳрĕк-сӳрĕк ĕçленине пула стройкăсен вырăнĕсене халĕ те сăнаса тухман-ха. Вăрманкасри кирпĕч савачĕ валли тăм кăлармали вырăна халĕ те сăнаса тухман.

Çапла ответлăха туймасăр ĕçлени строителства планне тултарассине хăрушлăх умне илсе пырать. Строителства планне ăнăçлăн тултармала тума çирĕп графиксем тăрăх ĕçлени кирлĕ. Выранти тата Апат-çимĕç промышлĕннăç Халăх Комиссариачĕсенче çавнашкалах пысăк тимлĕхпе ĕçлемеççĕ.

Хар. Лиçин.

Ăмăртура стаханăвĕцсем ӳсеççĕ

Канаш—Шупашкар чукунçул строителствинче чукунçул çинче ĕçлекенсен Пĕтĕм Сойузри кунĕ йачĕпе пыракан социалисăмлă ăмăрту сарăлсах пырать. Ăмăртăва çĕр чавнă, хăйăр турттарнă çĕрте, суртйĕр стройкисенче ĕçлекенсем тата машиниссемпе кондуктăрсем хутшăнаççĕ.

Социалисăмлă ăмăртса ĕçленине пула ĕç тухăçлăхĕ ӳссех пырать. Иккĕмĕш участкăра Кĕçĕн Çавал шывĕ патĕнче çĕр чавнă çĕрте ĕçлекен Трошин йулташ бригади Рубин йулташ бриадипе ăмăртăва тухнă хыççăн нормăна 200 процент тултарса ĕçлеме тытăнчĕ. Виççĕмĕш участкăри Ильдерков йулташ ийунь уйăхĕнчи плана 139 процент тултарнă хыççăн халĕ тата та лайăхрах ĕçлессишĕн тăрăшать.

Лини çине хăйăр сарнă çĕрте ĕçлекенсем: Сальникăв, Садыков тата ыттисем те ийунь уйăхĕнчинчен пысăкрах тухăçлăхпа ĕçлеме пуçларĕç.

Стройкăра культурăлă-массăлă ĕçе вăйлатас тĕлĕшпе те чылай ĕçсем туса ирттернĕ. Участкăсенче хĕрлĕ кĕтессене йĕркелеççĕ. Хут пĕлменнисене вĕрентме тытăннă.

М. Т.

Стаханăвла хăвăртлăхсемпе

КАНАШ. Вакунсем йусакан савăтра чукунçул çинче ĕçлекенсен Пĕтĕм Сойузри кунне хатĕрленесси сарăлсах пырать. Кашни рабочи, инженер, техник уйăва производствăра çĕнĕ ӳсĕмсем тунипе кĕтсе илессишĕн кĕрешет. Йăвăç каскалакан цехри рабочи Крутăвă йулташ ийулĕн 7-мĕшĕнче нормăна 359 процент, Антонăвă 244 процент тултарнă.

Нормăна икĕ хут ытла тултараканcем ытти цехсенче те пур. Механически цехри Миронăвă йулташ нормăна 415 процент, Сычов 300 процент, Соловйов 210 процент, Тимофейĕв 250 процент тултарса пыраççĕ. Урапа цехĕнчи рабочи Федăрăв йулташ 281 процент, Бахтулов йулташ 381 процент таран тултараççĕ.

Малта пыракан рабочи стаханăвĕцсем хăйсем производствăра пысăк тухăçлăхпа ĕçленипе пĕрлех ытти рабочисене техникăна алла илме, стаханăвла ĕçлеме вĕренме куллен пулăшса пыраççĕ.

Д. Иванов.

Çулйĕр çекцийĕ лайăх ĕçлет

Комсомолĕц Петров йулташ 1930 çултанпа Вăрман—Йенĕш йалсовечĕ çумĕнчи (Шăхасан р.) çулйĕр çекци руководителĕ пулса ĕçлет. Вăл йертсе пынипе йалсоветра çак çулсем хушшинче чылай пысăк ĕçсем тунă. Кăçал та йалсовет 100 кубла метр хăйăр, 21 кубла метр чул турттарса плана тултарчĕ.

Çулсене лайăх пăхса тăраççĕ. Пĕр километр çул çине хăйăр сарнă. Çул хĕррипе йăвăçсем лартнă. Пурте вĕсем лайăх çитĕнеççĕ.

Н. Михайлăв.

Чукунçул транспăртĕнче ĕçлекенсен Пĕтĕм Сойузри кунĕ умĕн

Чукунçул транспăртĕнче ĕçлекенсен Пĕтĕм Сойузри кунĕ çывхарса килет. Ку чаплă куна чукунçул транспăртĕнче ĕçлекенсем çеç мар, пĕтĕм çĕршыв уйавлать. Çак куна аслă Совет çĕршывĕнчи ĕççыннисем хамăр çĕршыв вăйлă та хăватлă чукунçул транспăрт тытакан державă пулса тăнишĕн савăнса уйавлаççĕ.

Халĕ чукунçул транспăрт хуçалăхĕн пур участкинче те чукунçул транспăртĕнче ĕçлекенсен Пĕтĕм Сойузри кунне пысăк ӳсĕмсемпе кĕтсе илессишĕн социалисăмлă ăмăртупа стаханăвла-кривоносăвла йухăм анлăн сарăлса пырать. Рабочисемпе инженерлă-техникăлă работниксем паравозсене, депосене, станцăсене тата ытти участкăсене культурăлă йĕркене кĕртессишĕн, вĕсене йалан лайăх ĕçлекен тăвассишĕн кĕрешеççĕ.

Кăнтăр—Донец чукунçул çинчи машинист Климăв йулташ хăйĕн паравозĕпе пĕр талăкра 800 километр ытла чупать. Унăн ырă пуçарăвне Çулйĕр Халăх Комиссарĕ Л. М. Каганович йулташ пысăккăн пахаланă, Климăв йулташа „Почетному железнодорожнику“ значокпа каградăланă. Дублинăри Каганович йачĕпе тăракан савăтри тимĕрç Камбаров йулташ хăйĕн нормине 760 процен таран тултарса ĕçлет. Хĕвелтухăç-Çĕпĕр чукунçул строителстви трестĕнче ĕçлекен каменщик Наумăв йулташ пĕр сменăра 42500 кирпĕч купалать. Кăнтăрти трест стройкинчи рабочи Чекригин йулташ 6 сехет хушшинче 51 нормă тултарнă.

Çавнашкал пысăк тухăçлăхпа ĕçлекенсем пирĕн республикăра та пур. Канашпа Шупашкар чукунçул строителствинче ĕçлекен Трошин йулташ бригади уйав умĕнхи ăмăртăва хутшăнса нормăна 200 процент ытла тултарса пыма тытăннă. Канашри вакунсем йусакан савăтри рабочисем: Миронăвă тата Крутăвă йулташсем виççĕшер нормă тултараççĕ.

Халĕ ĕнтĕ чукунçул строителствинчи, депосенчи, станцăсенчи, çавнашкалах чукунçул савăчĕсенчи руководителсен тата партипе профсойуз организацисен ăмăртăва пур рабочисене те йăвăçтарса, вĕсене плана тултарассишĕн, пысăк пахалăхпа ĕçлессишĕн кĕрешме организацилемеле. Анчах хальхи вăхăтра социалисăмлă ăмăртупа стаханăвла-кривоносăвла йухăма йертсе пырас тĕлĕшпе чылай участкăсенче сӳрĕк ĕçлеççĕ. Вакунсем йусакан савăт руководителĕсем стаханăвла йухăма йертсе пырассине стаханăвĕцсене хисеп йĕнĕпе шута илнипех тăватпăр, теççĕ пулас. Партипе профсойуз организацисем те сводкăсем илсе тăнисĕр пуçне урăх мĕн чухлĕ те пулин палăрмалăх ĕçсем туман. Унта ăмăрту договăрĕсене тĕрĕслессине, ударниксемпе ĕçлессине манăçа хăварнă. Цехсем пĕрпĕринпе ăмăрту договăрĕсем тунă. Анчах вăл договăрсене тĕрĕслемеççĕ. Савăт тунă договăра та пачах тĕрĕслемен.

Канаш — Шупашкар чукунçул строителствинче стаханăвĕцсен хисепĕ йерипен ӳсет. Стройкăра пин çын ытла ĕçлеççĕ пулсан, стаханăвĕцсем 44 çын çеç шутланаççĕ. Çавнашкал пулнишĕн чи малтанах руководителсем айăплă. Мĕншĕн тесен вĕсем стаханăвла ĕçлеме условисем туса парасси, стаханăвла ĕçлессишĕн тăрăшакан рабочисене куллен вĕрентсе пырасси çийе халĕ те тивĕçлипе пăхмаççĕ. Ĕçе капла хăвармала мар.

Чукунçул çинче ĕçлекенсен Пĕтĕм Сойузри кунĕ умĕнхи ăмăртăвăн тĕллевĕ—ийулĕн 30-мĕшне пур участкăсене те лайăх ĕçлекен тунипе кĕтсе илесси. Апла тумашкăн чукунçул транспăрт хуçалăхĕн пур участкисенче те пĕтĕм ĕçе малтанах тĕплĕн шутласа тунă график тăрăх организациленин, механисăмсемпе туллин усă курмала тунин, малтисен опычĕсене сарсах пыни кирлĕ. Чукунçул строителствинчи руководителсен çак тапхăрта стройкăна мала туртса кăлармала тăвас пулать.

Паллах, чукунçул строителствине мала кăларасси районсенчи партипе совет организацисем çине те пысăк ответлăх хурать. Районри организацисен строителства ĕçне ăнăçлăн илсе пыма кирлĕ чухлĕ ĕç вăйĕ организацилеме пулăшмала. Ку тĕлĕшпе хальхи вăхăтра нумайĕш районсем чăтма çук начар ĕçлеççĕ. Пайанхи куна строителствăра Шупашкар районĕнчен 20 çын тата 10 лаша, Канаш районĕнчен 28 çын, Вăрмар районĕнчен 6 çын, Вăрнар районĕнчен 4 çын çеç ĕçлеççĕ. Ытти районсенчен те çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Чукунçул çинче ĕç вăйĕ çителĕксĕр. Çавна пула строителства ĕçĕ кайа йулса пырать. Районри парти, совет организацисен вăхăта вăраха йамасăр строителствăра куллен 3000 çын ĕçлемеле тăвас пулать.

Чукунçул работникĕсен кунне тĕлейлĕ ĕçсен савăнăçлă уйавĕ туса ирттерер.

Мускав—Атăл канала ĕçе йанăранпа çулталăк тулчĕ

1937 çулхи ийулĕн 15-мĕшĕнче Мускав—Атăл канал тăрăх пассажирсене лартса, грузсене турттарса çӳрес ĕç пуçланнă. Вăл кун каналăн флагман пăрахучĕ „Иосиф Сталин“ тата теплоход „Клим Ворошилов“ шăпах расписанире палăртнă вăхăтра столицăн Çурçĕрти портĕнчен (Химкире) тухса, Калинин хулине çул тытнă.

Çулталăк хушшинче—çак пысăк мар срукра—канал Мускав çыннисен пурнăçĕпе йăлине çирĕпех кĕрсе вырнаçрĕ. Калама çук чаплă шыв магистралĕ—вĕсен канмали, екскурçисене кайса çӳремели йуратнă вырăнĕ.

Канал пăрахучĕсемпе çыранĕсем çинчи опытлă екскурсоводсем халиччен пулман стройкă историйĕ çинчĕн, унăн пысăкĕшĕ çинчен, пĕвесем, шлюзăсем, насуслă станцисем, шыва пӳлсе тăракан хапхасем, авари хапхисем мĕн тума кирли çинчен, вĕсем мĕнле ĕçлени çинчен пассажирсене тĕплĕн каласа параççĕ. Канала рекордлă кĕске срукра — 4 çул та 8 уйăхра туса пĕтернĕ. Ăна çак срукра туса пĕтермешкĕн пирĕн хăватлă сталинла индустри кăна вăй çитерчĕ. Çакна аса илни те çителĕклĕ: канала тунă çĕрте 171 екскаватăр, 191 гидромонитор, 1600 автомобил, 225 паровоз, 2113 чукунçул платформи, 240 бетономешалкă, 5750 електромотор тата темĕн чухлĕ механисăм ĕçленĕ. Çĕр ĕçĕсен пысăккăшĕ 150 мĕлйун кубометр ытла пулнă. 3 мĕлйун кубометр бетон, 850 пин тоннă цемент, 7 мĕлйун кубометр чул тата гравий хывнă.

Канала тунипе государствăшăн калама çук пысăк вырăнта тăракан 3 задачăна пурнăçа кĕртнĕ: пăрахутсем çӳремели таран шывлă, 128 километр тăршшĕ çул тунă, вăл çул столицăна Атăлпа пĕрлештерчĕ; Мускаври ĕççыннисене ĕçмешкĕн кирлĕ таранах, пĕр татти-сыпписĕр Атăл шывĕ парса тăрассине пурнăçа кĕртнĕ; Москва-рекăна тата унта йухса кĕрекен йуханшывсене тата шыв кĕртсе тарăнлатнă.

Мускав—Атăл канал вăл—икçĕр ытла сооруженирен тăракан нумай йенлĕ комплекс. 128 километр тăрĕш канал Валдай çӳлĕ çыранĕ (возвышĕнниçĕ) урлă гигантла пысăк шыв картлашки пулса тăсăлса выртать. Вăл çул тăрăх Атăл шывĕ, 5 хăватлă насус станцисем пулăшнипе, пусмаран пусма çине хăпарса пырать. Канала тăвакан сынсем пĕрремĕш класлă чи лайăх шлюзсем 11, икĕ тоннел, пассажир вокзалĕ, 9 пристань, тимĕрлĕ-бетонлă пĕве 3 тата тăпралă пĕве 8 тунă, чукунçул кĕперĕсем 7, шоссе кĕперĕсем 12 тунă, 8 гидростанци тата ыт. те нумай тунă.

Аслă Сталин йачĕпе тачă çыхăнса тăракан хăйсен каналне ĕççыннисем хĕрӳллĕн йуратаççĕ.

Ĕçлеме пуçланăранпа çулталăк хушшинче —1938 çулхи ийулĕн 15-мĕш тĕлне — канал флочĕ 1.200.000 ытла пассажир тата 900.000 тоннă йахăн груз турттарнă.

Çĕнĕ шыв магистралĕ тăрăх „Мускав тинĕсĕн“ çыранĕсем хĕрринчен столицă патне сулăсемпе баржăсем çинче йăвăç пырать, строителствă кирлĕ чулсемпе гравии илсе пыраççĕ. Йахромăри хапрăк пăрахутсем çинче хăйĕн çиппарлакан тата пир-авăр тĕртекен цехĕсенче туса хатĕрленĕ продукцисене тиесе йарать. Мускавран Калинин хули йеннеле апат-çимĕç таварĕсем, пурне те кулленех кирлĕ таварсем кайаççĕ.

Канал флотĕнче хальхи вăхăтра хăй тĕллĕн çӳрекен суднăсем 40, хăй тĕллĕн çӳременнисем (баржăсем) 100 шутланаççĕ.

Пассажирсене лартса çӳремели екскурçисене çӳремели 7 пăрахут канал çинче пĕрмайах, расписани тăрăх çӳреççĕ. Чаплăн капăрлатса тунă Атăл теплохочĕсем „Вячеслав Молотов“, „Клим Ворошилов“ тата „Михаил Калинин“ столицăри Çурçĕр портĕнчен Калинин хули патне çитиччен йаланах çӳреççĕ. Çурçĕр порчĕ—„Мускав тинĕсĕ“ лини тăрăх теплоход „Иосиф Сталин“ тата „Советская республика“, „Профессор Мечников“ пăрахутсем ĕçлеççĕ. Ийунь уйăхĕнче Çурçĕр порчĕпе Максим Горькийă йачĕпе тăракан канупа культурă Тĕп паркĕ хушшинче пăрахутсем çӳреме пуçларĕç. Кунта „Радищев“ тата „Шевченко“ пăрахутсем çӳреççĕ. Кунсеренех пиншер екскурсантсем, виççĕршер вырăнлă теплоходсем, катĕрсем çине ларса, Комсомольскайа йатлă пристань патне çитиччен кайа-кайа килеççĕ. Çавăн пекех Йахромă—Дмитров, Çурçĕр порчĕ—Пироговă тата Çурçĕр порчĕ — Химки чукунçул станцийĕ (сулахай çыран çинче) линийĕсем тăрăх та катĕрсем çирĕп расписанипе çӳреççĕ.

Ийулĕн 20-мĕшĕнче теплоход „Иосиф Сталин“ канал пăрахут историнче пĕрремĕш хут çĕнĕ лини—Химки вокзалĕ патĕнчен Мускав йуханшывĕ çинчи Даниловски кĕпер патĕнчи пристань патне çити тăсăлакан линине уçать. Теплоход Мускавăн çыран хĕрринчи гранитлă урамĕсем хушшипе çӳремеле пулать. Вăл Мускав шывĕ урлă хывнă илемлĕ кĕперсен айĕпе, Мускав Кремлĕн авалхи стенисем çумĕпе иртсе çӳремеле пулать.

Епĕр телейлĕ, епĕр Николай Иванăвич Йежов йертсе пынипе ĕçлетпĕр, вăл пире кулленех пулăшса пырать, ĕçĕн большевикла стилне вĕрентет. Шыв транспорчĕн сталинла халăх комиссарĕн пуçарувĕпе Мускав—Атăл каналăн пассажирĕсене çӳремешкĕн условисене пĕрмайах лайăхлатса пыраççĕ. Çĕнĕ линисем уçăлаççĕ, пристаньсем, портсем тата пăрахутсем çинче пассажирсене кирлĕ условисене лайăхлатаççĕ. Канал çинче çӳремели билетсене халь ĕнтĕ столицăри пур пысăк чукунçул вокзалĕнче те сутаççĕ, çавăн пекех тата Пушкин плошчăтĕнче, Горький йачĕпе тăракан канупа культурă Тĕп паркĕнче йатарласах тунă киоскенче сутаççĕ.

Мускав—Атăл канал çыранĕсемпе пăрахучĕсем çинче ĕçлеме пынă водниксене пысăк чыс — çĕршывăн калама çук чаплă шыв магистралĕ çинче ĕçлес чыс тивнĕ. Каналри работниксен составĕ халăх тăшманĕсен сатăрçă ĕçĕн йулашкисене пĕтерессишĕн, ĕçри пĕтĕм çитменлĕхсене пĕтерессишĕн кĕрешет. Епĕр хамăр пăрахутсене графикăна пĕр пăсмасăр ĕçлемеле тăвассишĕн, пассажирсене кăтартулă лайăх условисенче илсе çӳремеле тăвассишĕн кĕрешетпĕр.

Пассажирсене лайăх, паха условисенче илсе çӳрес тĕлĕшрен „Клим Ворошилов“ теплоходăн комсомолĕцсемпе çамрăксенчен тăракан команди пысăк çитĕнӳсем турĕ, çак кунсенче ăна шыв çул транспăрчĕн Халăх Комиссарĕ Йежов йулташ саламласа тав турĕ.

Мускав—Атăл канал çинче калама çук лайăх çынсем ӳсеççĕ. Пирĕн крановщик-механизатăр Иванов йулташ тата бригадир-грузчик Галкин йулташ канал çинче тивĕçлипех пур çĕрте те палăрса тăраççĕ, вĕсем шыв транспăртĕнчи мухтавлă стаханăвĕцăн Блидмăн йулташăн метăчĕсене ăнăçлăн алла илнĕ. „Иосиф Сталин“ теплоходăн капитанĕ Куприйанăв йулташ, „Вячеслав Молотов“ теплоходăн капитанĕ Званцов йулташ, „Михаил Калинин“ теплоходăн капитанĕ Никишин йулташ т. ыттисем те пăрахут çӳретес ĕç техникине отличнă вĕренсе çитнĕ.

Мускав—Атăл канал çинчи стаханăвĕцсен речĕ пĕр чарăнса тăмасăр ӳсет. Çакна кура ĕнтĕ епĕр шансă тăма пултаратпăр. Хамăрăн ĕç çинчен малтан „лайăх“ темеле, унтан „отлично“ темеле ĕçлеме пуçлăпăр.

В. Карпăв.

Мускав—Атăл канал пароходствин начальникĕ.

Китайри вăрçă

Вăтаçĕр Китайра, Цзйанси провинцин çурçĕр пайĕнче Китай çарĕсем, Йанцзы йуханшыв тăрăхĕнчи фронтра темиçе хутчен йăнăçлă атакăсем туса, хăйсен халиччении позицийесене кайăла туртса илнĕ. Йапонецсен вилсе тата аманса 400 çын çĕр ройран тухнă. Хукоупа Пынцзе хушшинче халиччении пекех пысăк çапăçусем пыраççĕ.

Пайанху кӳлли (Йанцзыран кăнтăр йенеле) районне Китай командăванийĕ фронта çирĕплетме çĕнĕрен пысăк вăйсем йанă. Унта йапонецсен наступленине чарса лартнă.

Ийулĕн 12-мĕшĕнче Китай авиацийĕ Йапонин Йанцзы йуханшывĕ çинче тăракан вăрçă карапĕсем çине икĕ хутчен пырса бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем тивнипе Йапонин 9 карап сийенленнĕ.

Çурçĕр Китайра, Шаньси провинцин кăнтăр-хĕвелтухăç пайĕнче, Йанченран хĕвелтухăç йенчи районра пулса иртнĕ çапăçусенче китайецсем Йапонинне 30 ытла çар грузовикĕсем çĕмĕрсе тăкнă тата нумай вăрçă хатĕрĕсем туртса илнĕ. Китай çарĕсем Цзежоу хули çинеле вăйлă контратака тума пуçланă.

Ийулĕн 12-мĕшĕнче Йапони самольочĕсем Лойан хули çине (Чженжоуран хĕвеланăç йеннеле) вĕçсе пырса бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем тивнипе çĕршер çурт çĕмĕрĕлнĕ. Мирлĕ халăх хушшинче вилнисемпе аманнисем пит нумай.

* * *

Официаллă хыпарсем пĕлтернĕ тăрах, Йапонин Кăнтăр Китай шывĕсем çинчи çар карапĕсем пулă тытакан 334 суднăна шыва путарнă. Пулăçсенчен нумайĕшне йапонецсем малтан çаратса пĕтернĕ, суднăсем çинче пулнă хĕрарăмсене ирексĕрлесе пусмăрласа мăшкăлланă, 234 çынна вĕлернĕ.

(ТАСС).

Испанири вăрçă

Левант фронтĕнче ийулĕн 12-мĕшĕнче сăрт-тусенче, тинĕсрен 20 километртра, калама çук хайар çапăçусем пулса пынă. Республиканецсем чылай позицисене тытса тăраççĕ, çав позицисем пăлхавçăсене малала кайма йăвăрлатса тăраççĕ.

Теруель провинцинче Кампильо районĕнче хайар çапăçусем пыраççĕ.

Центрти фронтра Карабанчел районĕнче республиканецсем минă сиктерсе йарса, пăлхавçăсене пит пысăк çыхату кӳнĕ, нумайĕшне тыткăна илнĕ вĕсене.

(ТАСС).

Китай оборони фончĕ валли укçа-тенкĕ пуххаççĕ

Вăрçă пуçланнăранпа çулталăк тулнă кун Уханра Китай оборони фончĕ валли укçа-тенкĕ пухас кампани пуçланнă. 5 кун хушшинче 1 мĕлйун ытла Китай долларĕ пухнă. Укçа-тенкĕ параççĕ: рабочисем, хресченсем, суту-илӳçĕсем, промышленниксем. Китай государствин Чан Кай-ши йертсе пыракан дейателĕсем нумай укçа-тенкĕ панă. (ТАСС)

Мускав хулине социалисăмлă реконструкцилени çинчен Америкăн хаçачĕ мĕн çырать

Америкăри „Нью Йорк таймс" йатлă чи пысăк хаçатăн Мускаври корреспонденчĕ, партипе правительствăн Мускав хулине реконструкцилесси çинчен историлĕ постановленийĕ йышăннăранпа виçĕ çул тултарнине палăрт туса, çапла çырать: „5 çул каялла хальхи столица пек мар, пысăк йал йевĕрлĕ пулнă. Хальхи вăхăтра вăл хăйĕн илемлĕхĕпе тĕлĕнтерет—мрамăрпа тата бронзăпа тумланнă Мускаври метро Лондăнпа Нью Йорк хулисенче пурăнакансене хăйсен илемсĕр метрополитенĕсемшĕн пичĕсене хĕретет. Мускав шывĕ урлă тунă çĕнĕ кĕперсем Парижре пурăнакан кирек хăш çынна та кĕвĕçтерме пултараççĕ. Вырăс çыннисем çĕршыври пуйанлăхсемпе усă курассинче тата вĕсене нумайлатассинче калама çук чаплă çитĕнӳсем тунă, вăл пуйанлăхсем хăйсен пысăккăшĕпе Канадăри, Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсенчи тата Мексикăри çерайĕнчи пуйанлăхĕсемпе, висĕшĕнне пĕрле илсе шутласан, танлашаççĕ". „Совет Сойузĕ,—çырать корреспондент йулашкинчен,—вăл малала хыттăн ӳссе пыракан çĕршыв, çамрăклăхпа телейлĕх çĕршывĕ пулса тăрать".

(ТАСС).

Йапони авиацийĕ Китай хулисем çине бомбăсем пăрахни

Ийулĕн 12-мĕшĕнче Йапонин 15 бомбовозĕ 50 истребительпе пĕрле Хонькоу çине вĕçсе пырса бомбăсем пăрахма хатланнă. Анчах çӳлеле перекен тупăсенчен вăйлă персе тăнипе, вĕсем хула патне вĕçсе çитеймесĕрех кайала çаврăнса кайнă. Кайала вĕçсе кайнă чухне вăл самольотсем Учан çине—Ханькоуран кăнтăр-хĕвеланăç йенчи пĕчĕк хула çине 100 бомбă пăрахса хăварнă. Бомбăсем тивнипе госпиталь çĕмĕрĕлнĕ, унта 30 çынна йахăн аманнă тата вилнĕ. Хулари чухăнсем пит нумай пурăнакан районсем çине бомбăсем нумай ӳкнĕ. Унта вилнисемпе аманнисем 200 çын ытла шутланаççĕ.

Çав кунах Йапонин 25 самольочĕ Кантон хули çине пырса 50 бомбă ытла пăрахнă. Вăл бомбăсенчен нумайĕшĕ вут хыптарса йараканнисем пулнă. Бомбăсем тивнипе 100 çын ытла вилнĕ, 200 çурт çĕмĕрĕлнĕ, темиçе çĕр джонкă (кимĕ) шыва путнă.

(ТАСС).

Германи самольочĕсем Чехословаки территори çийĕпе вĕçни

Йулашки кунсенче Германи самольочĕсем Чехословаки территорийĕ çине час та час вĕçсе кĕме пуç анă.

Ийулĕн 12-мĕшĕнче Германин 4 бомбардировщикĕ икĕ тĕлтен Чехословаки чикки урлă вĕçсе каçнă. Вĕсенчен пĕри Чехословакине икĕ километр шалала вĕçсе кĕрсе, çынсем пурăнакан пунктсем çийĕпе вĕçсе çӳренĕ.

Ийулĕн 13-мĕшĕнче Чехословакири Кутнау-Гора йатлă хула çывăхĕнче Чехословакин разведкă самольочĕсен отрйачĕ Германи самольотне çĕр çине хăваласа антарнă. Самольот мĕнле сăлтавсемпе чикке каçнине тĕпчесе пĕлмешкĕн самольот ларнă вырăна йатарласах комиçси тухса кайнă. Тĕпчесе пĕличченлĕхе Германи самольотне тата льотчикне тытса чарнă.

(ТАСС).

Манчжоу-Го çарĕсен пăлхавĕ

Ийулĕн 2-мĕшĕнче Манчжоу-Го çар чаçĕсенчи (Шаньси провинцин кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнче—Йуньчен хулинче вырнаçса тăракан чаçсенчи) салтаксем йапонецсене хирĕç восстани (пăлхав) çĕкленĕ. Пăлхав Китай çарĕсем хула çине атакă пуçланă вăхăтра пуçланнă. Пăлхав çĕкленĕскерсем аэродром çинче темиçе самольота çĕмĕрсе тăкнă тата Йапони льотчикĕсене вĕлерсе пĕтернĕ. Ийулĕн 4-мĕшĕнче Йуньчена Китай çарĕсем туртса илнĕ.

(ТАСС).

Совет Сойузĕ тăрăх

●● Украинăри „Большевик" савăтĕнчи хор капелли хăй ĕçлеме тытăннăранпа 15 çул тултарнă йатпа уйав туса ирттернĕ. Капеллăра активлăн хутшăнса ĕçлекенсене 37 çынна—савăтри рабочисене хаклă парнесем парса премиленĕ.

●● Узбекистанри аслă шкулсем кăçалхи çул 2.054 çамрăк специалис вĕрентсе кăлараççĕ.

●● РСФСР-ти шкул ачисене вĕренме кирлĕ хатĕрсем тăвакан предприйатисем вĕренӳ çулĕ пуçланиччен тĕле 58,3 мĕлйун штук карандаш, 828 пин коробкă çырмали перо тата 139 мĕлйун штук тетрадь туса кăлармала. Ийунь уйăхĕнче 29 мĕлйун штук кăрандаш, 540 пин коробкă перо тата 64 мĕлйун тетрадь туса хатĕрленĕ те ĕнтĕ.

●● Калинин облаçĕнчи Себежски тата Красногородски районĕсенчи чикĕ çывăхĕнчи çичĕ колхозра електростанцисем тума тытăннă. Çĕнĕ станцисем Октябĕрти социалисăмлă аслă революци 21 çул тултарнă тĕле çутă паракан пулаççĕ.

(ТАСС).

Çĕнĕ кинофильм.

ССР Сойузĕнчи екрансем çине „Руслан и Людмила" йатлă саслă художествăллă çĕнĕ фильм кăлараççĕ (А. С. Пушкин поеми тăрăх).

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: „Руслан и Людмила" фильмри кадр. „Руслан ролĕнче—С. Д. Стольаров артист, Людмилă ролĕнче—Л. С. Глазăвă артисткă.

Сойузфото репродукцийĕ („Пресsклише").

ПСÇЛКС 20 çул тултарнă йатпа туса ирттерекен чупусемпе походсем

Ийулĕн 12-мĕшĕнче Ташкентра ленинла комсомол 20 çул тултарнă йатпа велочупу стартне панă. Велочупăва тухса кайакансем вырăнсенче агитаци ĕçне тумала. Чупура 6 студент-комсомолец, вĕсем Ташкентри йуридически институтра вĕренеççĕ. Вĕсен пурĕ 3.000 километр каймала, урăхла каласан, Узбекистан йĕри-тавра çаврăнаççĕ. Кунсăр пуçне, Таджикистанпа Киргизири хăшпĕр хуласемпе кишлаксенче те пулаççĕ. Студентсем-агитаторсем ĕççыннисене Узбек С. Р. Верховнăй Совет тата тăванлă республикăсен Верховнăй Совечĕсен суйлав итогĕсем çинчен, çаван пекех тата орденлă ленинла комсомолăн çитес çывăх вăхăтрах пулакан йубилейĕ çинчен каласа памала.

* * *

Ийулĕн 12-мĕшĕнче Орша хулинче Днепр шывĕ тăрăх кимĕлĕ поход стартне панă. Походăн маршручĕ çапла: Орша—Херсон, 1.460 километр тăршшĕ. Похода ленинла комсомол 20 çул тултарнă йатпа тăваççĕ. Походра Оршари чукунçул техникумĕнчи студентсемпе преподавателсем, вĕсем пурĕ тăххăрăн. Походра пулакансем çул çинче Хĕрлĕ Çар нимĕç тата Польшă оккупанчĕсемпе çапăçнă çерти историлĕ вырăнсемпе паллашаççĕ.

(ТАСС).

Пирĕн пурнăç

Пирĕн пурнăç йумахри пек тулăх,
Сат пек вăл чечеклен йешĕрет.
Йешĕл хир, кăтра вăрманĕ, улăх—
Пуринче те ырлăх çĕн тивлет.

Çавăнпа йурлатпăр епĕр йура,
Йурламашкăн ирĕк те аван:
Вĕççем йуррăм шăранса мухтавлăн
Тăван çĕршыв тăрăх йан та йан!

Ĕлĕк пулнă пирĕнте асаплăх
Мен чул тӳснĕ, тăкнă йун, куççуль.
Пирĕнре халь пур телей, хаваслăх—
Пирĕн умра выртать çутă çул.

Аттем Сталин, ес телейлĕх патăн,
Ырлăх, ирĕк патăн ес пире.
Епĕр халь йем-йешĕл çурхи сатăн
Çеçкисем пекех таса хитре.

Аттем Сталин, çут хĕвел пек ĕмĕр
Йалкăшса çутат ман çĕршыва.
Савăнатпăр пурнăç аваннишĕн епĕр,
Савăнса тĕрлетпĕр пур йурра сăвва.

Аттем Сталин, ес телейлĕх патăн,
Тав сана аттемĕр, тав, сана мухтав!
Пур çĕре пăхатăн, пур çĕре сăнатăн—
Сан йату, хĕвел пек, йалкăшан йалав.

Г. Хурзай.

Нефть кăларакан промышленнăç çĕкленет

Сойузри нефть кăларакан промышленнăç ийунь уйăхĕнче нефть тата газ кăлармалли уйăх планне ытлашшипех тултарнă. Çапла лайăх ĕçлени кăçалхи çул пĕрремĕш хут пулнă-ха. Ийулĕн пĕрремĕш вунăкунĕнче те вăл лайăх ĕçленĕ. Çакна пула нефть кăларакан промышленнăç нефть тата газ кăлармали вунă кунлăх плана 102,7 процент тултарнă.

(ТАСС).

Мотоциклетсен чупăвĕ

Ленинградри мотоциклетсем туса кăларакан савăтри рабочисем пуçарнипе Ленинград—Таганрог—Ленинград маршрутпа моточупу организациленĕ. Чупу маршручĕ 6000 километр тăсăлать. Моточупун тĕп задачи—совет мотоциклечĕсен çирĕплĕхне тата тӳсĕмлĕхне тĕрĕслесси. Вĕсем Ленинградран Шупашкара çитиччен 1420 километр иртнĕ. Çав вăрăм çул çинче совет мотоциклечĕсем хăйсен тӳсĕмлĕхне, пĕр аварисĕр çӳреме пултарнине кăтартнă.

Моточупу командорĕ Петров тата политрук Кужейĕв йулташсем Чăваш республикĕнчи çулсене ырларĕç, вĕсене лайăхрах пăхма сĕнчĕç.

Моточупу бригадинче пĕтĕмпе 16 çын, вĕсем пурте советăн резинă промышленнăç савăчĕсенче хăйсен хастарлăхне кăтартнă стахановецсем.

Моточупăва тухнисем ийулĕн 13-мĕшĕнче Шупашкар хулинче пулчĕç, çав кунах Хусан хулине çул тытрĕç.

Хула тăрăх

Стадионра йĕрке çук

Стадион халăх нумай пухăнакан, хула ĕççыннисен канӳне культурлă ирттерме кирлĕ вырăнсенчен пĕри пулса тăрать. Канмалли кунсенче, ытти кунсенче те ĕç хыççăн Шупашкар хулинчи ĕççыннисем „Темп" обшчествин стадионне пиншерĕн пухăнаççĕ. Футбол тата спортпа физкультурăн ытти вăййисем хула ĕççыннисене стадиона йыхăраççĕ, мĕншĕн тесен физкультурăпа спорт халăхăн куллехи пурнăç йăлине кĕрсе пырать.

Хулара „Темп" обшчествин пĕртен-пĕр стадион пур, анчах çав стадионра та ĕççыннисене савăнтармалли йĕркелĕх питĕ те сахал. Стадионра лармалли вырăнсем çитмеççĕ. Пĕр пĕчĕк трибунă тата хăмаран тунă пĕр рет тенкелсĕр пусне, урăх лармалисем çук. Çавăнпа футбол вăййи пынă вăхăтра халăх мечкă тапса кĕртмели алăк тавра, полĕ хĕррине пуçтарăнса тăрать. Ку вăл выльакансемшĕн те, курма пынă çынсемшĕн те питĕ кансĕр йапала.

Стадионра курма пыракан çынсене ларма трибунă тăвасси çинчен нумайранпа калаçаççĕ. Анчах вăл калаçу çеç-ха.

Стадионра хăш чухне те базар, те физкультурăпа спорт вăййи пырать, пелме хĕн. Плошчадкăра футболла выльаççĕ, çав хушăрах выльакансемпе пĕрле ача-пăчасем чупса çӳреççĕ, кашкăраççĕ, хушăран качакасем те кĕрсе кайаççĕ. Ку çеç те мар, вăйă хĕрсе пынă вăхăтра чупмали çул çинче велосипедпа, мотоциклпа йарăнса çӳреççĕ, нимĕн йĕркелĕх те çук. „Темп" обшчествин хăйĕн стадионне йĕркене кӳртессишĕн тăрăшмасть. Стадионра йĕркелĕ буфет çукки те çавна лайăх кăтартса парать.

Йулашкинчен тепĕр „пĕчĕк" çитменлĕх. Ытти хуласенчи стадионсенче „Красный спорт" тата ытти хаçат-журналсене сутас ĕçе йĕркеленĕ. Пирĕн Шупашкар стадионĕнче çак кирлĕ ĕçе пуçарас тесе тăрăшмаççĕ. Тĕрĕссипе каласан, кунта укçа-тенкĕ те кирлĕ мар, пичет сойузĕпе килĕшсе татăлсан, пиншер çын пухăнакан стадионра темиçе тенкĕлĕх хаçат сутма пулать. Ку ĕнтĕ вăл стадиона пухăнакан çынсемшĕн тăрăшни пулĕччĕ.

Çавăн пекех, стадионра городки, волейбол тата ытти тĕрлĕ вăйăсене выльамалли плошчадкăсемпе хатĕрсем çителĕклĕ пулмала. „Темп" обшчествин стадионĕнче çаксем çитмеççĕ-ха халĕ.

Шупашкарти пĕртен-пĕр стадиона йĕркелесси „Темп" обшчествин ĕçĕ кăна мар. Ку стадиона пур йенчен те лайăхлатас пулсан физкультурăпа спорт комитечĕн те, хула совечĕн те ĕçпе пулăшмала.

Р. Шашков.

Пулни-иртнисем

Ачине вĕлернĕ. Мулкачкассинчи (Тутаркас р.) Дмитрийĕвă Акулинă ийулĕн 5-мĕшĕнче ача çуратса, ачине пăвса вĕлернĕ. Хай айăпне йышăннă. Ĕçе суда панă.

Ответлă редактăр Н. И. СЕМЕНАВ.

М. Н. Данилăв-Чалдун

ВИЛĔМ ХУЛИ[*]

(Калав)

Генри Мис, чӳречи витĕр хĕрарăм сасси илтнипе ăйхинчен вăранчĕ:

— Канлĕ çывăрма та памаççĕ,—тарăхса йатлаçрĕ. Ан илтем тесе пуçĕ айĕнчи минтерне илсе хăлхисене хупларĕ.

Хĕрарăм сасси тепĕр хут илтĕнчĕ:

— Ах, тархасшăн пулăшăр!

— Чӳрече умĕнчен кай! Мĕн пулăшма пултаратăп епĕ сана çурçĕр тĕлĕнче?—тесе кăшкăрчĕ Генри Мис, минтер айĕнчен пуçне кăларса. Унтан каллех хупланса выртрĕ.

Çук. Хĕрарăм сасси хăлхинчен тухмасть. Вырткан-выртсан вырăнĕ çинчен сиксе тăчĕ. Минтерне айăккала ывăтса йачĕ. Чӳречи патне пырса итлерĕ. Сасă илтĕнмест. Унтан чӳречине уçса кăшкăрчĕ:

— Кам унта! Мĕн кирлĕ?

Çук, никам та хирĕç ответ паракан пулмарĕ. Чӳречерен пуçне кăларса пăхрĕ: никам та курăнмасть. Тĕлĕнсе кайрĕ. Хăйне-хăй ĕненместь. „Тен епĕ тĕлĕкпе аташатăп-и?"—шухăшлать. Пуçне минтер çине те хурса ĕлкĕреймерĕ, каллех хĕрарăм сасси йантраса кайрĕ:

— Ох, вилетĕп, пулăшăр!

Генри Мис тăрса ларчĕ:

— Вилсĕн те пулăшма пултараймастăп. Епĕ вĕт тухтăр мар,—хăй тĕллĕн каласса ларать. Çан çурăмĕ пĕр сивве шăнать, пĕр вутла пĕçерет. Лампă çутса йачĕ. Каллех чӳречерен пырса пăхрĕ. Çук, никам та курăнмасть. „Ăçта пытанса ларнă вăл хĕрарăм?"

Хĕрарăм тепĕр хут чунхавальпе çухăрчĕ:

— Ай, пулăшăр!

Халĕ ĕнтĕ Генри Мис лайăх илтрĕ: хĕрарăм сасси чӳрече умĕнче мар, алăк йенче. Васкаса тумланчĕ. Тен хĕрарăма чăнах та пулăшу кирлĕ-и? Пăхать: алăк йанахи çумĕнче чăнах та пĕр хĕрарăм тайăнса ларать.

— Мĕн? Мĕн пулнă сире?

— Тархасшăн пулăшăр,—йăлăнса ыйтать хĕрарăм.

— Ну, калăр, мĕнпе пулăшма пултаратăп епĕ сире?

— Манăн пилĕк тытать. Пульницăна çитиччен пулăшма ыйтатăп,—пăшăлтатать хĕрарăм, нумай ахлатса тытăнни сассипе.

— Аплатăк, тахçанах калаççĕ ăна. Айăр, тăрăр,—Генри Мис хĕрарăма хулĕнчен тытса йатса тăратрĕ те, урамала çавăтса тухрĕ.

Урамра автомобилсем каллĕ-маллĕ чупаççĕ. Генри Мис вĕсенчен—пĕрне чарса хĕрарăма лартса кайасшăн пулчĕ:

— Хĕрарăм аптăранă. Пульницăна леçме пулăшăр,—тесе йăлăнчĕ.

Çук, пĕри те чарăнмарĕç. Вăшлатса ирте-ирте çеç кайрĕç. Пĕр автомобилĕ пулăшме мар, чуть таптаса кайатчĕ, аран пăрăнса ĕлкĕрчĕç.

Генри Мис аптăранă хĕрарăма çавăтса, пульницăна çитерчĕ. Унтан алăкне шаккаса уçтарчĕ.

Çывăрнипе куçĕсене уçайман хĕрлĕ çӳçлĕ сестра хирĕç тухрĕ.

— Ак, аптăранă хĕрарăм илсе килтĕм, йышăнăр,—терĕ Генри Мис.

— Ăçта ĕçлет?—тесе ыйтрĕ сестра.

— Ăçта ĕçленине пĕлместĕп.

— Тĕлĕнмеле. Мĕнле пĕлмеле мар ху арăму ăçта ĕçленине?

— Вăл ман арăм мар. Епĕ ăна хамăн хватер алăкĕ умĕнчен тупса илсе килтĕм.

— Ĕççĕр хĕрарăм апла. Епĕр кунта ун пеккисене йышăнмастпăр. Вĕсен валли урăх пульницă пур.

— Ăçта вăл?

— Инçе мар, пурĕ вуникĕ çухрăм,—кĕскен ответлерĕ сестра. Унтан алăкне хупрĕ те, çаклатса хучĕ.

Хĕрарăм ыратнипе ниçта кайса кĕреймесĕр ăшаланать. Шăлĕсене шатăртаттарать.

— Кунта йышăнмарĕç. Айтăр, леш пульницăна леççе хăварам,—терĕ Генри Мис.

— Кунта илсе килнĕшĕн те тав тапуç сире, манран урăх утасси пулмасть. Хăварăр çакăнтах.

— Йурĕ еппин. Йулăр. Епĕ сутăлсан килсе пăхăп.

* * *

Хватерне çитсен саланса выртрĕ Генри Мис. Унăн пуçне тĕрлĕ шухăшсем пăлхатма пуçларĕç. Унтан вăл месерле çаврăнса выртрĕ те, куçĕсемпе мăччанала пăхса шухăша кайрĕ: „Кам? Мĕнле хĕрарăм пулчĕ вăл? Йатне те ыйтса пĕлмерĕм. Упăшки пур-ши ун? Тен вăл проституткă? Çук, проституткă ача суратмасть. Мĕншĕн-ха епĕ ăна хам хватере илсе кĕмерĕм. А хам пата илсе кĕнĕ пулсан, мĕнпе пулăшма пултараттăм-ха епĕ ăна? Ак, час çулталăк çитет ĕнтĕ ĕççĕр пурăнатăп. Кам пулăшĕ хама та?"

Генри Мис тарăн шухăша путнипе унăн пӳлĕмĕ тăварланса çитнĕ пек туйăнать. Шăрăх. Çамки çине тар пĕрчисем тухрĕç. Вырăнĕ çĕртен сиксе тăрса ларчĕ. Çамки çинчи тарне шăлса типĕтрĕ. Аллисемпе чĕркуçийĕсем çине тайăнчĕ. Куçĕсене хупса чылай вăхăт ларчĕ.

Тул çуталать.

— Ах, мансах кайнă,—терĕ Генри Мис.—Ман вĕт ача çуратма аптăранă хĕрарăма кайса пăхмала.

* * *

Вăл пульницă умне васкаса утса çитрĕ. Пăхать: хĕрарăм пăсăр йепле выртса йулнă, халь те çаплипех выртать. Ури вĕçĕнче тин çуралнă ача курăнать, анчах сасси çук. Амăшĕ те куçĕсене хупнă.

Çав вăхăтра пульницă умне хура сăрпа сăрланă пысăк автомобил çитсе чарăнчĕ. Ун çинчен виçĕ çын сиксе анчĕç.

— Мĕн пăхса тăратăн? Санăн арăм-и? Ху пытаратăн-и? Йе пире паратăн-и? — терĕ вĕсенчен пĕри, Генри Мис патне утса пырса.

— Илĕр. Манăн ăна пытарма укçа çук.

Çавăнтах автомобил çинчен аннă çынсенчен иккĕшĕ хĕрарăма йатса вырттарчĕç, виççĕмĕшĕ ачине илсе амăшĕне йунашар пăрахрĕ. Унтан хăйсем кабинкăна кĕрсе ларчĕç те, автомобил хускалса кайрĕ.

Генри Мис тĕлĕнсе пăхса йулчĕ. Вăл тин чухласа илчĕ, çак хура автомобил кашни ир урамсем тăрăх мĕншĕн çӳренине: вăл çĕр касситчен вилнисене пуçтарать мĕн.

— Ах, ăçта тарса хăтăлас ку вилĕм хулинчен,—хăй тĕллĕн калаçса хватерĕ йенеле утрĕ Генри Мис.

Хевел тухăçĕ хĕреле пуçларĕ. Хула ăйхăран вăранать.

[*] Автăртан: ку калава урăхçĕршыври И хула çинчен, хаçатсенче пичетленнĕ статйăсем çинчен шухăшласа çырнă

Тӳрĕлĕх

КУСЛАВККА. Мушар йалĕнчи Васçилий Коричĕв йулташ Куславкка йалповĕн 1-мĕш номĕрлĕ магазинĕнче тавар сутакан пулса ĕçлет. Коричĕв йулташ хăйне шанса панă ĕçе йалланах тӳрĕ кăмăлпа туса пырать.

Ийулĕн 6-мĕшĕнче магазина такамăн укçа кармавĕ ӳксе йулнă. Вара ăна Коричĕв йулташ çав кунах районри милици уйрăмне кайса панă. Кармавта 62 тенкĕ те 7 пус укçа, 1.500 тенкĕлĕх укçа докуменчĕсем тата ытти хутсем те пулнă.

Ийулĕн 9-мĕшĕнче укçа кармавне хуçине тавăрса панă. Унăн хуçи рейдра бракер пулса ĕçлекен Н. И. Леванăв пулнă.

А. Петров.

Йалти библиотекă

ВĂРМАР. Пысăк-Йенкасси йалсовечĕ йалта библиотекă уçрĕ. Библиотекăра ĕçлеме пĕр комсомолкăна йатарласа курсран вĕрентсе кăларчĕç. Кунта чылай лайăх кĕнекесем пур. Сăмахран, Н. Островскин „Хурçă йепле хĕрнĕ", „Тăвăлпа çуралнисем", Фурмановăн „Чапаев", Шолоховăн „Уçнă çерем" романĕсене тата Елкерĕн „Хĕн-хур айĕнче" поемине колхозниксем пит йуратса вулаççĕ.

А. Никифăрăв.

„Чăвашвăрманпром" трестăн Шăмăршăри вăрманпромхозне
машинисткă васкавлă кирлĕ.
Ĕçукçи килĕшӳ тăрăх.
Адрес: Шемурша, ЧАССР, рабочий поселок д. № 16. Леспромхоз к директору.
Дирекция.
2—2

ВНИМАНИЮ ПОДПИСЧИКОВ
В отдел подписки и экспедиции КОГИЗ'а гор. Чебоксары ул. М. Горького д. 5.
ПОСТУПИЛИ
следующие подписные издания
Большая Советская энциклопедия том: 28, 30, 31, 32, 35, 36, 37, 56, 58, 59, 60, 61, 62, 63.
Цена отдельного тома 15 руб.
Техническая энциклопедия. Тома: 2, 5, 18, 21, 22, 25.
Цена отдельного тома 10 руб.
Малая Советская энциклопедия, Тома: 1, 4, 5, 6.
Цена тома 10 руб.
Большая Медицинская энциклопедия. Тома: 17, 35.
Цена тома 15 руб.
ПУШКИН—полное собрание сочинений в 6-ти томах 1, 2, 3 том.
Цена тома 5 руб.
ГОГОЛЬ—Полное собрание сочинений в 6-ти томах 3, 5, 6 том.
Цена тома 6—50, 5—50 и 4 руб.
ЩЕДРИН—Губернские очерки.
Цена 5—50.
ШИЛЛЕР—1 том, цена 15 руб.
Чувашское республиканское отделение КОГИЗ'а

Уполномоченный Чувашглавлита № 362 Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 881.